Республикăн библиотеки

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Январь 5
ШĂМАТКУН
№ 4 (8656)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. Большевикла агитацие куллĕн вăйлатмалла. Редакцие килнĕ çырусене пăхса тухни (2 стр.).
Д. Селихов.—Колхозсенче электростанцисем ытларах лартар (2 стр.).
СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ. И. Кузьмин, М. Александров.—Икĕ ял Совечĕ—икĕ тĕслĕх (2 стр.).
ФЕЛЬЕТОН. Яков Арслан. — Матвеев каллех шкулта... (2 стр.).
«Чăваш Коммуни» хаçатра çырнă хыççăн (2 стр.).
И. Жадецкий, С. Аслан.—Канаш хулинче (3 стр.).
Кашни колхозра вăйлă утар пулмалла. Республикăри хурт-хăмăр ăстисен канашлăвĕнчен (3 стр.).
ЫЙТУСЕМПЕ ОТВЕТСЕМ. Ф. Кузьмин, Е. Софронов.—Электроннăй микроскоп çинчен (3 стр.).
ООН ГЕНЕРАЛЬНАЙ АССАМБЛЕЙИН УЛТТАМĔШ СЕССИЙĔ. Америкăпа Англи блокĕ «коллективлă мерăсем йышăнас» тĕлĕшпе тума сĕнекен ĕçсен агрессиллĕ тата хăрушă тĕллевĕсене СССР делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский тăрă шыв çине кăларнă (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Промышленность предприятийĕсене пĕр тикĕс, график тăрăх ĕçлеттерессишĕн

1951 çулта совет халăхĕ, Ленин — Сталин партийĕ ертсе пынипе, аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ çул кăтартса пынипе, коммунизм строительствинче çĕнĕрен пысăк çитĕнÿсем турĕ.

1952 çулта пирĕн умра çĕнĕ те ответлă задачăсем тăраççĕ. Халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене те малалла аталантармалла, коммунизм стройкисене тăвас ĕçе хăвăртлатмалла, ĕççыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене малалла лайăхлатмалла, вĕсен культурине ÿстермелле.

Социализмла экономика государство планĕ тăрăх малалла аталанса пырать. Правительство çирĕплетсе паракан план сĕршыври мĕнпур предприятисен ĕçне пĕтĕçтерет. Халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Кашни предприяти производство планне тăтăш ăнăçлă тултарça пырсан çеç пирĕн экономика хăвăрт, план тăрăх аталанма пултарать.

Пĕр тикĕс, график тăрăх ĕçлени предприятин тĕп фончĕсемпе лайăх усă курма, оборотри укçа-тенкĕ çаврăнăшне хăвăртлатма, ĕç тухăçлăхне ÿстерме, продукци ытларах туса кăларма, хăйне ларакан хакне чакарма май парать. График тăрăх ĕçлени производство культури çÿлĕ пусăмра тăнине, технологи процесне лайăх йĕркеленине пĕлтерет. Малта пыракан предприятисемшĕн график—закон.

Çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсем совет çыннисем Тăван çĕршыв гĕрекне тата вăйлатассишĕн, тĕнчери мире çирĕплетессишĕн чĕререн тăрăшса ĕçлеме хатĕррине, вĕсен пуçарулăхĕпе пултарулăхĕ пĕрмай ÿссе пынине кăтартаççĕ. Çĕмĕрлери экстракт тăвакан «Большевик» завод, Шупашкарти чăлха фабрики, Улатăрти пăравуссем юсакан завод тата ытти малта пыракан предприятисен коллективĕсем çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенчи задание чыслă тултарнă.

Анчах хăшпĕр предприяти руководителĕсем плана кашни цехпа участокра кунран-кун тултарса пымалла тăвассишĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ. Чылай фабрикăсемпе заводсенче, строительство организацийĕсенче çĕнĕ çул, уйăх пуçламăшĕнче васкамасăр ĕçлес, каярахпа вара штурмлама тытăнас йăлана халĕ те пĕтерменха. Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод пысăк çĕнтерÿсем турĕ. Ку—паха тĕслĕх. Анчах детальсемпе материалсем вăхăтра хатĕрлесе хуманнипе январĕн 2-мĕшĕнче сборочнăй цехсем япăх ĕçленĕ. завод кулленхи задание тултарайман. Çакă вăл завод руководителĕсем çĕнĕ çулта ĕçлеме тивĕçлĕ хатĕрленменнине кăтартать. Çак кунсенче Шупашкарти тир-сăран комбиначĕ тата Улатăрти атă-пушмак фабрики япăх ĕçленĕ. Ивановăри кирпĕч завочĕ талăкри задание çуррине çеç тултарса пырать. Уйрăмах Шупашкарти пир-авăр комбинатне тăвас ĕçри çитменлĕхсене палăртас пулать. Правительство комбината тума пĕлтĕрхинчен нумай ытларах укçа-тенкĕ уйăрса панă. Пысăклатнă плана ăнăçлă тултарас тесен ĕç хăвăртлăхне икĕ виçĕ хут ÿстерни кирлĕ Çак кунçенче строительствăна монтаж управленийĕ пĕлтĕрхинчен те япăхрах ĕçлет.

Хăшпĕр предприятисенчи парторганизацисемпе хуçалăх руководителĕсем большевиксен партийĕ штурмовщинăна пĕтересси çинчен темиçе хут та асăрхаттарнине мансă пулас. Партин Пĕтĕм Союзри XVIII-мĕш конференцийĕ предприятисем плансăр ĕçленине, продукци пĕр тикĕс мар туса кăларнине, штурмовщинăна пĕтерме кирлине палăртрĕ, кашни фабрикăпа завод, шахтăпа чугун çул ĕçне малтан çирĕплетсе хунă график тăрăх ĕçлеттермелле тума хушрĕ. Конференци кăтартăвĕсем парти организацийĕсемшĕн паянхи кун та боевой программа пулса тăраççĕ.

Предприятисенчи парторганизацисем производство культурине ÿстерессишĕн, государство заданине çулталăкăн малтанхи кунĕсенчех тултарса пымалла тăвассишĕн, штурмовщинăна пĕтерессишĕн тимлĕ кĕрешес ĕçе пуçарса ертсе пыма тивĕçлĕ. Хăшпĕр хуçалăх руководителĕсем производство планне пĕчĕклеттерме пăхаççĕ, теприсем—плана тултарма хĕллехи йывăрлăхсем кансĕрлеççĕ, теççĕ. Парторганизацисен çавăн пек киревсĕрлĕхе хирĕç вирлĕн кĕрешес пулать. Пирĕн предприятисен хĕлĕн-çăвĕн пĕр тикĕс ĕçлеме мĕн кирли пурте çителĕклĕ. Ĕçе тĕрĕс организацилени, тĕл пулакан çитменлĕхсемпе чăрмавсене большевикла хăюлăхпа пĕтерсе пыни. массăсене умра тăракан задачăсене пурнăçлама мобилизацилени кирлĕ.

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви пирĕн республика промышленноçне малалла аталантарассине уйрăмах пысăка хурса хакласçĕ. Кăçал Чăваш республики промышленноçне вăйлатма партипе правительство нихăш çулхинчен те ытларах укçа-тенкĕ пама палăртнă. Пысăк строительство программине ăнăçлă пурнăçлас тесен, строительство организацийĕсен ĕçĕнче татăклă улшăнусем тумалла, строительсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлă сармалла.

ВКП(б) обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ чылай предприятисем çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ. Промышленность енĕпе ĕçлекен министерствăсемпе управленисем, хăшпĕр ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомсем, хула Совет исполкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем предприятисем плана пĕтĕмĕшпе тултарнипе лăпланса лараççĕ, уйрăм фабрикăсемпе заводсем юлса пынипе, пĕр тикĕс мар ĕçленипе килĕшсе тăраççĕ. ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомсен хуçалăх организацийĕсене ертсе пырас ĕçе çÿлĕ пусăма хăпартмалла, рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене предприятисен резервĕсемпе лайăхрах усă курма, пахалăх кăтартăвĕсене тултарса пыма мобилизацилемелле, юлса пыракан участоксене кадрсемпе çирĕплетмелле, хуçалăх руководителĕсен ответлăхне ÿстермелле, критикăпа самокритикăна анлă сармалла.

Хуçалăх çитĕнĕвĕсем, вĕсем çирĕп пулассн тата нумай вăхăта пырасси пĕтĕмĕшпех партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçĕн çитĕнĕвĕсенчен килеççĕ, çак условисемсĕр, хуçалăх çитĕнĕвĕсем тĕрексĕр пулма пултараççĕ, тесе вĕрентет пире Сталин юлташ. Предприятисенчи парторганизацисен, партиллĕ-массăллă ĕçе кунран-кун вăйлатса пырса, социализмлă ăмăртăва тата çÿлĕрех пусăма хăпартассишĕн, рабочисен, инженерсемпе техниксен политикăллă активлăхĕпе ĕçри хастарлăхне пĕрмай ÿстерсе пырассишĕн кĕрешмелле.

Хаçатăн ĕнерхи номерĕнче РСФСР Вăрман промышленность министерствин «Чăвашвăрман» тресчĕн вăрман хатĕрлекен предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисем, инженерсемпе техниксем, служащисем тата колхозниксем СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ патне янă çыру пичетленсе тухрĕ. Республикăри вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсем пысăк та чыслă обязательствăсем йышăнчĕç. Аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕре И. В. Сталин юлташа панă сăмаха чыслă пурнăçласси—кашни вăрманпромхоз, район, колхоз тивĕçĕ.

1952 çулхи производство планне ăнăçлă тултарассишĕн предприятисенче социализмлă ăмăртăва çĕнĕ хăватпа вăйлатар!

1951—1952 ÇУЛСЕНЧИ КĔРКУННЕПЕ ХĔЛЛЕХИ ВĂХĂТРА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА «ЧĂВАШВĂРМАН» ТРЕСТ ЕНĔПЕ 1952 ÇУЛХИ ЯНВАРĔН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Касса хатĕрленĕ	Çул хĕррине илсе тухнă	Турттарса кăларнă
Улатăр	56,8	60,7	36,9
Элĕк	63,7	48,5	26,2
Вăрнар	72,0	51,9	28,3
Йĕпреç	63,0	46,1	34,5
Ишлей	46.3	—	14,4
Калинино	63,9	36.0	62,2
Канаш	67,6	63,5	47,8
Комсомольски	69 2	83,2	56,1
Куславкка	63,1	73,0	45,4
Красноармейски	50.0	14.5	30,5
Хĕрлĕ Чутай	66,8	46,8	—
Кувакино	37,6	47.7	14,3
Сĕнтĕрвăрри	60,0	45,2	26,0
Муркаш	104,5	106,3	—
Октябрьски	45,5	61,3	37,7

Районсем	Касса хатĕрленĕ	Çул хĕррине илсе тухнă	Турттарса кăларнă
Первомайски	70,7	30.6	47,0
Пăрачкав	63,2	65.3	62,9
Советски	56.5	—	37,4
Сĕнтĕр	84,5	40.3	17,8
Вăрмар	48,0	59,5	21,8
Çĕрпÿ	47.6	63.4	33,5
Шупашкар	71,2	131,1	16,4
Чкаловски	79 2	51,6	29,0
Чурачăк	59.9	37,4	22,0
Шăмăршă	47,1	56,9	36,8
Шăхасан	55,8	62,5	30,1
Çĕмĕрле	98 1	106,1	11,8
Етĕрне	67,3	—	35,8
Елчĕк	23.8	39,4	26,2
Тăвай	42,9	62,3	24,1

ХИСЕП ХĂМИ

«Чăвашвăрман» трест тата ĕççынни депутачĕсен район Совечĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх 1951—1952 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тата ирттерсе тултарнăшăн республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

9. Комсомольски районĕнчи **«Красная звезда»** колхоз (председателĕ **П. Яковлев** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **В. Дерягина** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **В. Карсаков** юлташ). Колхоз 1951 çулхи декабрĕн 7-мĕшĕ тĕлне йывăç касса хатĕрлемелли плана 102,9 процент, турттарса кăлармалли плана 105,7 процент тултарнă.

10. Комсомольски районĕнчи **Мичурин ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Е. Карпов** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **С. Гладков** юлташ). Колхоз 1951 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне йывăç касса хатĕрлемелли плана 101,6 процент, турттарса кăлармалли плана 112,5 процент тултарнă.

11. Çĕрпÿ районĕнчи **«Сталинцы» колхоз** (председателĕ **А. Сергеев** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Н. Федоров** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **А. Данилов** юлташ). Колхоз 1951 çулхи декабрĕн 8-мĕшĕ тĕлне йывăç касса хатĕрлемелли плана 103,1 процент. каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 103,5 процент, турттарса кăлармалли плана 102,5 процент тултарнă.

12. Куславкка районĕнчи **Молотов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **П. Юршкин** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **М. Александрова** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **И. Григорьев** юлташ). Колхоз 1951 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне йывăç касса хатĕрлемелли плана 106,4 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 120 процент, турттарса кăлармалли плана 109,2 процент тултарнă.

Чугун тата хурçă шăратмалли çулталăкри плана тултарнă

Хура металлурги министрĕ И. Тевосян юлташ Хура металлурги министерствин предприятийĕсем 1951 çулта чугун шăратса кăлармалли плана декабрĕн 27-мĕшĕнче тата хурçă шăратса кăлармалли плана декабрĕн 31-мĕшĕнче тултарни çинчен СССР Министрĕсен Совечĕн Председательне Иосиф Виссарионович Сталин юлташа пĕлтернĕ.

Металлургсем домна кăмакисемпе тата мартен кăмакисемпе лайăхрах усă курмалла тунă, производство технологине лайăхлатнă, малта пыракансен ĕç меслечĕсене анлă сарнă тата çĕнĕ домна кăмакисемпе мартен кăмакисене ĕçе кĕртнĕ.

Ĕç тухăçлăхне ÿстермелли тата продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли плана министерство ирттерсе тултарнă.

И. В. Бабушкин аса илсе çырни

Государствăн политикăллă литература издательстви «Иван Васильевич Бабушкин асаилĕвĕсем. 1893—1900 ç. ç.» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнă. Кĕнеке пысăк тиражпа пичетленсе тухнă. Кĕнеке пуçламăшĕнче И. В. Бабушкин рабочи пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен кĕскен çырнă. И. В. Бабушкин В. И. Ленинпа тĕл пулса ĕçленипе революционер-профессионал пулса тăнă. Вырăс халăхĕн паттăр ывăлĕ И. В. Бабушкин большевиксен партине туса хурассишĕн, патша самодержавине сирпĕтсе антарассишĕн, хамăр çĕршывра пролетариллĕ революци çĕнтермелле тăвассишĕн кĕрешнĕ мухтавлă çынсем хушшинче паллă вырăн йышăнса тăнă.

Кĕнекере В. И. Ленин çырнă «Иван Васильевич Бабушкин (некролог)» ятлă статья пур. Ку статья 1910 çулхи декабрĕн 18(31)-мĕшĕнче «Рабочая газета» ятлă хаçатăн 2-мĕш номерĕнче пичетленсе тухнă. Бабушкин çинчен В. И. Ленин: вăл партин мухтавĕ, халăх паттăрĕ, хăйĕн пурнăçне пĕтĕмпех рабочи класа ирĕке кăларассишĕн кĕрешес ĕçе панă çын, тесе çырнă.

1902 çулта çулла И. В. Бабушкин тĕрмерен тарса, Лондона пынă, ун чухне «Искра» редакцийĕ Лондон хулинче пулнă. Бабушкин унта В. И. Ленинпа тĕл пулнă. Вăл хăйĕн 1893—1900 çулсенчи пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕсем çинчен аса илсе çырнине В. И. Ленин ыйтнипе çырнă. И. В. Бабушкин аса илсе çырнисене малтанхи хут Октябрьти Социализмлă Аслă революци пулнă хыççăн пичетлесе кăларнă.

И. В. Бабушкин ленинла «Искра» хаçатăн малтанхи агенчĕсенчен пĕри, унăн хастарлă корреспонденчĕ пулнă, «Искра» хаçат рабочисен массисемпе çыхăнса тăнине сарса тата çирĕплетсе пынă. Кĕнеке çумне хушса пичетлесе кăларнинче И. В. Бабушкин çырăвĕсем пур, вĕсене «Искра» хаçатра 1901 çулта пичетлесе кăларнă. (ТАСС)

Совет Союзĕ тăрăх

Аслă стройкăсене—хăватлă оборудовани

Йывăр машинăсем тăвакан промышленность министерствин предприятийĕсем коммунизмăн аслă стройкисен çĕнĕ заказĕсене пурнăçлама тытăннă.

Куйбышев тата Сталинград гидроэлектростанцийĕсене тăвакансем валли экскаваторсем. йывăр япаласем çĕклемелли машинăсем. крансем тата çĕре пăраласа шăтарса пăхмалли станоксем туса хатĕрлеççĕ.

Уралти машинăсем тăвакан заводра çĕр чавмалли çĕнĕ пысăк машинăсем тăваççĕ. Çав машинăсенчен иккĕшне Кăнтăр Украина тата Çурçĕр Крым каналĕсене тăвакансем патне ярса параççĕ. Çĕр чавмалли çĕнĕ машинăсен курки кашни ăсмассерен 14 кубометр çĕр чавса кăларать. Уралти машинăсем тăвакан завод çавăн пекех тата Атăл çинче гидроэлектростанцисем тăвакансем валли экскаваторсемпе ытти оборудовани туса парать. Уралти заводра ĕçлекенсем Куйбышеври гидроэлектростанцие тăвакансем патне чул вакламалли икĕ машина ярса параççĕ. Çакăн пек кашни машина пĕр сехетре 350 тонна чул ваклаçа хатĕрлеме пултарать.

Йывăр машинăсем тăвакан министерство предприятийĕсем Атăлпа Дон хушшинчи канал валли оборудовани тăваççĕ. Вĕсем кăçал йывăр япаласем çĕклемелли крансем тата ытти машинăсем туса параççĕ.

Сталинград гидроэлектростанцине тăвакансем патне çĕре шăтарса пăхма ятарласа тунă станоксем ярса параççĕ. (ТАСС).

Аслă стройкăра

ТАХИА-ТАШ, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Туркменири тĕп канал строительствинче çĕнĕ предприятисем ĕçе кĕрсе пыраççĕ.

Султануиздаг строительство районĕнче механически мастерскойпа электростанци туса пĕтерсе ĕçе янă.

Тахиа-Ташра тĕрлĕрен машинăсене юсамалли механически мастерской, автомобильсем юсамалли мастерской, кирпĕч тата бетон завочĕсем, йывăç япаласем тăвакан комбинат тума тытăннă

Заем вылявĕ пулать

1952 çулхи январь уйăхĕнче СССР халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантармалли виççĕмĕш государственнăй заемăн çиччĕмĕш вылявĕ пулать. Кăçал заем вылявĕсене 19 хут ирттерме палăртнă, январьти выляв çав вылявсенчен пирвайхи пулать.

Заемăн çиччĕмĕш вылявĕнче 226 разрядри облигацисем çине мĕнпурĕ 1.949,250 выляв, 520,116.400 тенкĕ выляв укçи тухмалла. Заем вылявне январĕн 20-мĕшĕнче Кострома хулинче ирттереççĕ. (ТАСС).

Волгодонстрой. Красноармейски строительство районĕнче канал айккисене тата шыв айĕнчи пайне хытараççĕ. Канал айккисене тимĕр-бетон плитасем хураççĕ, тĕпĕнче—хăйăрпа вак чул хурса фильтр тăваççĕ. Шыв тĕпне хуракан хăйăрпа вак чул тикĕс вырттăр тесе водолазсем сăнаса тăраççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. Н. Васильев водолаз сăнаса пăхма шыва кĕрет.

А. МАКЛЕЦОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитес умĕн

Вырăссен аслă писателĕ Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнине палăртма хатĕрленес ĕç пĕтĕм çĕршывра сарăлса пырать.

Грузире çав куна палăртма республикăри комитет тунă. Комитет составĕнче—литературăпа искусствăн паллă деятелĕсем тата наука работникĕсем.

Таджикистанра вырăссен аслă писателĕ Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнине паллă тума анлăн хатĕрленеççĕ. Таджикистанри государство университетĕнче Н. В. Гоголь ячĕпе наукăллă сесси ирттерме хатĕрленме тытăннă. Таджик ССРĕнчи государство издательстви Н. В. Гоголĕн суйласа илнĕ произведенийĕсен пĕр томне таджик чĕлхипе пичетлесе кăларать. Сталинабадри, çавăн пекех республикăри ытти хуласемпе районсенчи библиотекăсенче Н. В. Гоголь произведенийĕсен тата ун çинчен çырнă произведенисен выставкисене тăваççĕ.

Чăваш АССР-ĕнче Н. В. Гоголĕн икĕ кĕнекине—«Ревизор» тата «Иван Ивановичпа Иван Никифорович мĕнле хирĕçсе кайни çинчен» пичетленсе тухнă. Çавăн пекех тата «Диканька çывăхĕнчи хуторти каçсем» ятлă кĕнекене, Гоголь повĕçĕсен сборникне чăвашла куçарнă. Чăвашсен драма театрĕ «Ревизор» комедие çĕнĕрен лартма тытăнать. Вырăс драма театрĕ «Авлану» ятлă спектакль лартма хатĕрленнĕ.

Политикăллă тата наукăллă пĕлÿсем саракан Пĕтĕм Союзри обществăн **Одесса** облаçĕнчи уйрăмĕ, М. Горький ячĕпе тăракан наукăллă библиотекăпа пĕрле, Н. В. Гоголь творчестви çинчен лекцисем ирттерет. Малтанхи лекцие «Н. В. Гоголь—вырăссен аслă писателĕ» темăпа вуласа панă. Одесса хулинче облаçĕнче тата ытти темăсемпе лекцисем нумай ирттереççĕ. (ТАСС).

Совхозри наукăллă ĕçсен пилĕк çуллăх планĕ

БУРУЛДАЙ (Фрунзе облаçĕ). Ильич ячĕпе тăракан совхозри специалистсем, выльăхчĕрлĕх пăхакансем тата опытниксем, ученăйсем пулăшнипе, 1952—1956 çулсенче наукăллă ĕçсем туса пымалли план туса хатĕрленĕ.

Пилĕк çуллăх план тăрăх нумай ыйтусене пĕрле тĕпчесе вĕренсе татса пама палăртнă. Кĕтÿ çÿретмелли вырăнсене тĕпрен лайăхлатаççĕ тата курăксем акса ÿлăхсем тăваççĕ.

Опытниксен агрономсемпе пĕрле тинĕс шайĕнчен 2,5 пин метр çÿллĕшĕнчи вырăнта пысăк тухăçлă тымарçимĕç тата курăк ÿстермелли майсене палăртса хатĕрлеççĕ.

Совхозри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем кашни ĕнерен çулталăкра 5 пин килограмран кая мар сĕт суса илме, суса илнĕ пĕтĕм сĕтре 4 процент çу пулмалла тума задача лартнă.

Совхозра выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăша ÿстерессн çине уйрăмах тимлĕ пăхаççĕ. Çамрăк выльăх-чĕрлĕхсене сăрттусем çинчи кĕтÿ кĕтмелли вырăнсенче ытларах вăхăт çÿретме хăнăхтараççĕ. (ТАСС).

Ялхуçалăх выставкисем

Мускав облаçĕнчи пур районсенче те ялхуçалăх выставкисем пулнă. Выставкăсене колхозсем, совхозсем, МТС-сем тата наукăпа тĕпчев учрежденийĕсем хут[...] шăннă.

Выставкăсенчи нумай экспонатсем[...] таблицăсемпе диаграммăсем колхозсемп[...] совхозсем, уй-хир ĕçĕнчи стахановецсе[...] 1951 çулта çĕнĕ çитĕнÿсем тунине кă[...]тартса параççĕ.

Облаçри колхозсемпе совхозсем вăйлă[...] тырпул пухса кĕртнĕ, государствăна ты[...]рă памалли плана срокчен тултарнă[...] Иртнĕ çулта государствăна тулă, 1950 çулхипе танлаштарсан, виçĕ хут нумай[...]рах панă. Ленински, Мытищи, Ухтомски, Красногорски тата ытти чылай район[...]сем обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчет[...]мелли виçĕ çуллăх плана срокчен тул[...]тарнă.

Выставкăсене курма пыракансем ялху[...]çалăхĕнче малта пыракансен опычĕ[...] паллашнă. Ленински, Кунцево, Раменски тата ытти хăшпĕр районсенчи выставкă[...]сене лайăх ăратлă хаклă выльăх-чĕрлĕх[...]сене, ĕнесене, рысак лашасене, ăратл[...] сыснасене, кроликсене илсе пынă.

Районти выставкăсенче ялхуçалăхв[...] механизациленине лайăх кăтартса пан[...] 1951 çулта облаçри машина-трактор ста[...]цийĕсем колхозсене, 1950 çулхипе та[...]лаштарсан, 712 пин гектар ытлара[...] тракторсемпе суха туса панă. Кашни 1[...] лаша вăйлĕ тракторпа сухалани 57,[...] гектар ÿснĕ. МТС-сем выставкăсенче çĕ[...] машинăсемпе ĕç хатĕрĕсем нумай кăтар[...]нă. Халĕ ĕнтĕ çак çĕнĕ машинăсем[...] пур колхозсенче те ĕçлеççĕ.

Выставкăсем 2 кунтан пуçласа 15 ку[...] хушши ĕçленĕ. Унта лекцисемпе кал[...]çусем нумай ирттернĕ.

Выставкăсене пур çĕрте те ĕççыннисе[...] интересленсе пăхнă. (ТАСС).

Украина çуракине хатĕрленет

КИЕВ, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). У[...]раинăри машина-трактор станцийĕсем[...] колхозсем хĕрсех çуракине хатĕрленеç[...] Çак вăхăт тĕлне, иртнĕ çулхипе танла[...]тарсан, темиçе пин ытларах трактор[...] юсанă. Республикăри 13 облаçра тĕрĕсле[...] пăхнă тăрăх, узловой меслетпе ĕçлеме т[...]тăннăранпа тракторсене лайăхрах юса[...] палăрнă. Республикăри нумай МТС-сен[...] çак узловой меслетпе ĕçлеççĕ.

Украинăри колхозсем çуркунне ак[...] вăрлăх хатĕрлемелли плана ирттерсе ту[...]тарнă. Вăрлăхсене сортласа пĕтереç[...] Кăçал курăк вăрлăхĕсем пĕлтĕрхинч[...] чылай ытларах хатĕрлесе хунă. Вырăн[...] удобренисем иртнĕ çулхинчен 10 милли[...] тонна ытларах уя кăларнă.

САХĂР ЗАВОЧĔ ĔÇЛЕМЕ ПУÇЛАНĂ

Курск облаçĕнче çĕнĕрен туса лар[...] «Большевик» ятлă сахăр завочĕ ĕçле[...] пуçланă. Сахăр завочĕ кашни талăкра [...] пин центнер сахăр кăшманĕнчен сах[...] тăвать. (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Большевикла агитацие куллен вăйлатмалла

(Редакцие килнĕ çырусене пăхса тухни)

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви республикăри ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн, вĕсен культурине ÿстерессишĕн куллен тăрăшаççĕ, республикăри промышленноçпа ялхуçалăхне çитĕнтерес ĕçре тапхăрта вăйлă агитаторсем тума пысăк пулăшу параççĕ. Республикăри пиншер агитаторсем ĕçсыннисен анлă массине коммунистсен партийĕпе Совет правительстви Чăваш республикине панă пулăшу çинчен куллен ăнлантарса параççĕ, рабочисемпе колхозниксене коммунизм строительствин задачисене ăнăçлă пурнăçлама мобилизацилеççĕ.

Предприятисемпе колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем уйрăмах халăх сучĕсен суйлавне иртернĕ тапхăрта агитацилле-массăллă ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе пысăк та паха опыт туянчĕç. Чылай агитаторсем халĕ çав паха опытпа анлă усă кураççĕ, ĕçсыннисем хушшинче агитацилле-массăллă ĕçе куллен вăйлатса пыма тăрăшаççĕ.

Пĕрлешсе пысăкланнă «Красная звезда» колхозри агитаторсем,—тесе çырать Комсомольски районĕнчи А. Еремеев юлташ,—витĕмлĕ те большевикла тĕрĕс сăмахпа тата хайсен пархатарлă ĕçĕпе мĕнпур колхозниксене ĕçре ÿсĕмсем тума хавхалантараççĕ. Агитаторсем бригадăсенче, хайсене çирĕплетсе панă участоксенче калаçусем иртереççĕ. Стена хаçачĕсемпе боевой листоксем вăхăтра кăлараççĕ. Колхозри пуçламăш парторганизаци политикăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркелени производствăра çĕнĕрен те çĕнĕ ÿсĕмсем тума пулăшать. Колхозниксем 1951—1952 çулсенчи вăрман хатĕрлемелли плана пирĕн районта пуринчен малтан тултарчĕç. Вăйлă тырпулшăн, суракине лайăх хатĕрлессишĕн пыракан кĕрешÿ вăйланчĕ.

Чурачăк районĕнчи «Прогресс» колхозри агитаторсем политшкулта вĕренеççĕ. Вĕсем, хайсен политикăллă тавракурăмне ÿстернĕ май, обществăллă ĕçсене активлă хутшăнаççĕ, производствăра та лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Я. Яковлев юлташ уй-хир бригадин бригадирĕ пулса ĕçлет. Вăл колхозниксене партипе правительство решенийĕсем çинчен тăтăшах ăнлантарса парать, совет халăхĕн коммунизм строительствинчи аслă çĕнтерĕвĕсемпе паллаштарать. Политшкулта тăрăшса вĕренекен Е. Григорьев, В. Константинов, В. Степанов, Г. Ефремов юлташсем колхозниксем хушшинче активлă ĕçлеççĕ, тесе пĕлтерет П. Иванов юлташ.

Совет интеллигенцийĕ халăх хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе хутшăнассине хăйĕн тивĕçĕ вырăнне хурса шутлать. «Элĕкри вăтам шкулта вĕрентекен учительсем «Çуттăлла», Киров ячĕпе тăракан, Жданов ячĕпе тăракан колхозсен членĕсене лекцисемпе докладсем тăтăшах вуласа параççĕ,—тесе пĕлтерет М. Михайлов юлташ. Учительсем çак иртнĕ тапхăрта кăна колхозниксене 22 докладпа лекци вуласа панă, политикăллă темăсем тăрăх 67 калаçу иртернĕ. Вĕсем колхозниксене тĕнчери лару-тăрупа, миршĕн тăракансен çĕнтерĕвĕсемпе тăтăшах паллаштараççĕ. Учитель-агитаторсем колхозниксене Л. П. Берия юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци 34 çул тултарни çинчен тунă доклада тĕплĕ ăнлантарса панă. Учительсем докладсемпе калаçусене колхоз умĕнче тăракан задачăсемпе тачă çыхăнтараççĕ. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсене ĕç дисциплинине çирĕплетме, обществăллă пурлăха лайăх сыхласа усрама, артель хуçалăхне çирĕплетес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Политикăллă агитацие вăйлатас тĕлĕшпе агитаторсене пĕр-пĕрин опычĕсемпе тăтăшах паллаштарса тăни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Етĕрне районĕнчи корреспондентсем чылай пуçламăш парторганизацисенче агитаторсен семинарĕсене тăтăшах иртерни çинчен çыраççĕ. Пуçламăш парторганизацисем çумĕнчи агитколлективсем агитаторсен канашлăвĕсене те час-часах иртереççĕ.

Лайăх тĕслĕхсемпе пĕрлех агитацилле-массăллă ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Хăшпĕр парторганизацисем халăх сучĕсен суйлавĕ иртнĕ хыççăн политикăллă-массăллă ĕçе начарлатрĕç. Çакă вăл, паллах, питĕ пысăк çитменлĕх пулса тăрать. Политикăллă ĕç вăл тапхăртан-тапхăра тумалли ĕç мар. Политикăллă агитацие куллен вăйлатнă май, парторганизацисен ĕçсыннисен производствăллă тата политикăллă активлăхне ытларах та ытларах ÿстерсе пымалла. Çакă вăл пуçламăш парторганизацисен пирвайхи тивĕçĕ пулса тăрать.

Халĕ пуçламăш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем иртеççĕ. Отчетпа суйлав пухăвĕсенче большевикла критикăпа самокритикăна вăйлатса пырса, политикăллă-массăллă ĕçе лайăхлатмалли майсене тĕплĕ палăртас пулать.

Культура çуртĕнче

ЕТĔРНЕ. Районти культура çуртĕ юлашки вăхăтра хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. 1951 çулта культура çуртĕн агиткультбригади колхозсенче 30 концерт панă.

Çак кунсенче литература каçĕ пулса иртрĕ. ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Павлов юлташ «Ленинла-Сталинла комсомол совет литературинче» тема тăрăх доклад туса пачĕ. Доклад хыççăн хулари çамрăксем совет писателĕсен чи лайăх произведенийĕсем çинчен тухса каларĕç. «Ленинла-Сталинла комсомола» ятлă литературăпа музыка монтажне кăтартрĕç, комсомолпа мир çинчен çырнă сăвăсене вуласа пачĕç.

Çавăн пекех кино-лекци иртерчĕç. МТС-ăн аслă агрономĕ Шетинин юлташ «Мичурин вĕрентĕвĕ тата ялхуçалăх культурисен селекцийĕ» темăпа лекци вуларĕ, ун хыççăн «Мичурин вĕрентĕвĕ тата ялхуçалăх культурисен селекцийĕ» ятлă кинофильм кăтартрĕç. Çакăн пек кино-лекцисем вашни тунтикун пулса иртеççĕ.

Г. МЫТИКОВ.

Харьковри государство университечĕн биологи институтĕ нумай çул пурăнакан ватă çынсене шута илнĕ, вĕсем çинчен тĕплĕ пĕлсе карточкăсем çине çырса хунă. Çавăн пек карточкăсем институтра нумай пин шутланаççĕ. Институт шутланă тăрăх Совет Союзĕнче çĕр çула çитнĕ çынсем Украинăра 2.700 çын пур. А. Ф. Хмарска—Украинăри чи ватă хĕрарăм, вăл 118 çулта. А. Ф. Хмарска ачаранах Одесса облаçĕнчи Котовски районти Борщи ятлă ялта пурăннă.

УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: А. Ф. Хмарска хăйĕн ачисен ачисен ачисемпе.

А. ПОДБЕРЕЗОВСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ

Икĕ ял Совечĕ—икĕ тĕслĕх

КАНАШ. Йăлмачча ял Совечĕ хăйĕн организацилле-массăллă ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Вăл çирĕп план тăрăх ĕçлет. Ял Совечĕ хăйĕн сессийĕсемпе ларăвĕсенче хуçалăхпа культура строительствин ыйтăвĕсене вăхăтра пăхса тухса пурнăçа кĕртсе пырать.

Ял Советне кĕрекен «1-мĕш Мая» колхоз иртнĕ çул вăйлă тырпул пухса кĕртсе, государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татрĕ. Халĕ колхозра çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешÿ пырать.

Вăйлă тырпул çитĕнтерниипе пĕрлех обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана та колхоз срокчен пурнăçларĕ. Колхозра пурĕ пилĕк ферма: ĕне, сурăх, сысна, кайăк-кĕшĕк тата кролик фермисем.

Колхоз Тăван çĕршыва выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана та ăнăçлă тултарчĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе ферма работникĕсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Сыснасем пăхакан М. Прокопьева юлташ çуласерен кашни сысна аминчен вăтам шутпа 18-шар çура илет. Çавăн пекех сурăх фермине ĕçлекен Г. Федоров, доярккăсем Е. Иванова, М. Иванова юлташсем хастарлă ĕçлеççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерес ĕçре колхоза ял Совет депутачĕсем тата активистсем кулленех пулăшса пыраççĕ.

Йăлмачча ял Совечĕ финанс планне тултарассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, 1951 çулхи IV-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне 100,8 процент тултарчĕ. Ялани бюджет комиссийĕ укçа-тенкĕ пухас ĕçе халăх хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса янипе туса пырать. Бюджет комиссийĕн членĕсем ĕçсыннисем хушшинче кашни эрнерех калаçусем иртереççĕ, вĕсене хуçалăхпа культура строительствин задачисемпе паллаштараççĕ.

Йăлмачча ял Совечĕ хуçалăхпа культура строительстви задачисене пурнăçлас тĕлĕшпе малта пырать пулсан, Шакăлак ял Совечĕ вăл енĕпе ĕçсем пачах урăхла пыраççĕ. Шакăлак ял Совечĕ пулăшас ĕçре аякра тăрать. Вăл плансăр ĕçлет. Кунта депутатсемпе активистсене обществăллă ĕçе хутшăнтарман, сессисене пĕтех те кичем иртереççĕ, йышăннă решенисене пурнăçласа пынине кирлĕ пек тĕреслемеççĕ.

Ял Советне кĕрекен «Искра» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсем тырпул пухса кĕртес, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçне ÿстерес ĕçре кайри вырăнта тăраççĕ. Ку колхозсенче сысна, ĕне, сурăх усрамалли виçĕ çуллăх плана тултарман.

Ял Совечĕ культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсем çинчен сахал сÿтсе явать. Çавна пула ялти клуб ĕçсыннисем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе начар туса пырать.

Ялани комиссисем хут çинче кăна шутланаççĕ, нимĕнле ĕçе те хутшăнмаççĕ. Ял Совечĕ вĕсемпе канашлусем иртермест, кăтартусем памасть.

Финанс планне тултарасси ял Советĕнче чăтма çук япăх пырать. Ял Совечĕ финанс планне пĕр кварталта та тултарайман. Уйрăммăнах заем укçине пухас ĕç питĕ начар. 1951 çулта ял Совечĕ 31.905 тенкĕлĕх заем сарнă, вăл шутран «Искра» колхоз членĕсем хушшинче 15.990 тенкĕ, Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хушшинче 15.915 тенкĕ. Анчах та паянхи куна заем укçине мĕн пурĕ те 9.200 тенкĕ кăна пухнă. Заем укçине пухас тĕлĕшпе ял Совет сессийĕнче тата исполком ларăвĕнче те сÿтсе явнă, анчах та йышăннă решенисене пурнăçланине тĕрĕслемен пирки укçа-тенкĕ пухас ĕç начар пырать.

«Искра» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсем 1951—1952 çулхи вăрман хатĕрлев планне тултарас тĕлĕшпе те начар ĕçлеççĕ.

И. КУЗЬМИН.
М. АЛЕКСАНДРОВ.

Фельетон

Матвеев каллех шкулта...

Хăй çураласа ÿснĕ Первомайски районне киле кĕриччен вăл инçетри вырăнсенче, урăх облаçсемпе республикăсенче, хăйне никам та курман-илтмен вырăнсенче çÿренĕ. Çапла кирлĕ пулнă унăн. Çĕпĕрти районсенче пулнă вăл. Красноярск крайĕнче Назарово районĕнчи Алтатри çичĕ çул вĕренмелли шкулта учитель пекки пулса «ĕçленĕ», янкăр хĕвеллĕ Грузире, Башкирти районĕнчи Демур-Булан ялĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорĕ тата ытти те.

Унти çутĕç пайĕсенче ларакан пуçлăхсем ăна хапăл туса тарават кĕтсе илнĕ.

— О!—тенĕ вĕсем,—пире институт пĕтернĕ çынсем питĕ кирлĕ. Тивĕçлĕ кадрсем, уйрăммăнах математиксем çитеймеççĕ,—куçлăхĕсене ялтăртаттарса çĕнĕ çын çине пăхса илнĕ пуçлăхсем.—Хăварах пĕлетĕр, çамрăк ăрăва коммунистла воспитанипе çирĕп пĕлÿсем пама педагогика ĕçĕн чăн-чăн мастерĕсем кирлĕ...

Çамрăк çын вăрăм çÿçĕсене çÿлелле шăлса янă та, ÿсĕрнелем пекки туса илнĕ.

— Мĕскĕн çын эпĕ,—тесе суйнă вăл хурланăçлăн,—эпĕ сĕм тăлăха юлса тертленсе ÿснĕ. Çапах та телейĕме çухатмарăм—чăвашсен учительски институтне вĕренсе пĕтертĕм. Акă документсем,—çамрăк çын виç-тăватă пÿлĕмлĕ хулăн портфелĕнчен хутсем кăларса хунă.— Подлинникĕ пединститутра, эпĕ унта III-мĕш курса заочно вĕренме кĕтĕм...

Вăл чăвашсен учительски институтне пĕтерни çинчен калакан документăн хăй аллипе çырнă копине тăсса панă. Лайăх документ, «отличнăсем» те пайтах, копине Красноярск крайĕнчи Назарово районĕнчи нотариус пичечĕпе çирĕплетнĕ...

Çулсем иртнĕ. Хĕл иртнĕ те çулла пулнă, çу иртнĕ те хĕл çитнĕ. Матвеев Петр Никитич, çапла унăн хушамачĕ, ячĕ тата ашшĕ ячĕ—ютра пурăнса «йăлăхнă», ытти учительсем унăн «педагогика ĕçĕнчи мастерлăхĕ» пирки иккеленсе пăхкалама тытăннипчен шикленнĕ. Матвеев çуралнă çĕршыва шăвать.

— О!—тенĕ ăна Первомайски районĕнчи çутĕç пайĕнче ларакансем.—Пире институт пĕтернĕ çынсем кирлĕччĕ-ха! Хăварах пĕлетĕр, тивĕçлĕ кадрсем, уйрăммăнах математиксем..

Çамрăк çын каллех вăрăм çÿçĕсене çÿлелле шăлса янă та, мăнаçлăн кăххăм тукаласа илнĕ.

— Ĕçleme Çĕпĕрте те аванччĕ,—тенĕ вăл,—ырасшăн мар пайтах тапăçланчĕç. Уйрăммăнах институт пĕтернĕ учительсем ылттăн хакĕнче çÿреççĕ. Анчах манăн çуралнă çĕршыва кăмăл туртрĕ. Хамăн мĕнпур пархатарлă пултарулăха, институтра илнĕ пĕлÿвĕмсене чăваш халăхĕн культурине аталантарас ĕçе парнелес терĕм... Акă эпĕ Красноярскинчи учительсен институтне вĕренсе тухни çинчен, унтах физмат факультечĕн III-мĕш курсне заочно вĕренме кĕнĕ документсем...

Матвеев виç-тăватă пÿлĕмлĕ хулăн портфелĕнчен хутсем туртса кăларнă.

— Подлинникĕсем Красноярскинчи пединститутра.

— О! Эсир директорта та ĕçленĕ... Опыт пысăк... Сире хăвăр ялах яратпăр апла. Ишлĕри çичĕ çул вĕренмелли шкула, директор пулатăр...

Аван пыраççĕ Матвеевăн «ĕçсем». Çутĕç пайĕнчен хăнасем килкелесех тăраççĕ. Хăй те кун сиктерсе тенĕ пек Первомайскине кайсах тăрать...

Чи малтан вăл «шкулти çÿп-çап тула тухмалла мар» условисем туса хурать, 13 учительрен çурри ытла хăйĕн тăванĕсемпе çывăх тусĕсене шкула вырнаçтарать, «пĕрене çуракĕсем илтесрен» техничкăна та хăйĕн тетĕшĕн хĕрне кĕртет... Укçа институт пĕтернисен тулли ставкипе... Пахча 0,41 гектар... Учительсен конференцийĕсенче, канашлусенче «активлă», институт пĕтереймен учительсене ятлать...

1948 çулта Матвеев директор пулса ĕçленĕ шкул çунса кайсан, ăна ĕçрен кăларнă пекки тăваççĕ. Ĕççĕр тăмасть Матвеев, картла укçа çапать, хир ĕнне пурасем туса сутать... Каярахпа Матвеев каллех учитель. Люляри çичĕ çул вĕренмелли шкулта математик...

Вулаканăм, халлĕхе пире çакă паллă: Матвеев П. Н. институтсем мар, вăтам шкул та пĕтермен, хăйне совет çынни пек тыткаламаншăн 1937 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче ăна Аслă Патăрьелĕнчи педтехникумăн II-мĕш курсĕнчен хăваласа янă. Çав вăхăтран пуçласа паянхи кунччене вăл улталаса тунă суя документсемпе пурăнать. Тата та ытларах, вăл халĕ Ишлĕри 7 çул вĕренмелли шкулта декретнăй отпуска кайнă учительница вырăнче ĕçлет.

Кадрсене ĕçе илесси çине çиелтен пăхнăшăн, ултавçăна куçкĕретĕн хÿтĕлесе усранăшăн, Матвеев суя документсемпе паянхи кунччене усă курнăшăн кам ответлă? Пирĕн шутпа, райçутĕç пайĕ тата унăн руководителĕ Швецов юлташ.

Яков АРСЛАН.

Редакцирен: П. Н. Матвеев мĕнле майпа учитель пулса тăнине Чăваш АССР Çутĕç министерстви лайăх пĕлет. Ăна министерство иртнĕ çулхи декабрĕн 8-мĕшĕнче «Чăваш Коммуни» хаçат редакцине çакăн пек çырса пĕлтерни кăтартса парать: «Тĕрĕслесе пĕлнĕ тăрăх, вăл (П. Н. Матвеев. **Ред.**) вĕренни çинчен суя документсем тунă пулсан та, районти çутĕç пайĕ ăна кăçал отпуска кайнă пĕр хĕрарăм вырăнне (арăмĕ вырăнне. **Ред.**) Ишлĕри çичĕ çул вĕренмелли шкулта пуçламăш классенче вăхăтлăха ĕçлеме ирĕк панă».

Чăваш АССР Çутĕç министерстви асăннă çырурах: райçутĕç пайне П. Н. Матвеева ĕçрен кăларма хушнă, тесе пĕлтерет. Çавах та П. Н. Матвеев паянхи кунччен Ишлĕ шкулĕнче ĕçлет.

Колхозсенче электростанцисем ытларах лартар

Пирĕн республикăри колхозсенче электростанцисем лартас ĕç çултан-çул вăйланса пырать. 1941—45 çулсенче колхозсенче 8 гидроэлектростанци тунă пулсан, вăрçă хыççăнхи пилĕкçуллăхра—54 гидроэлектростанци туса пĕтернĕ.

Анчах та пирĕн республика колхозсенче электростанцисем тăвас енĕпе ытти облаçсемпе республикăсенчен юлса пырать. Колхозсенче электростанцисем тумалли план çултан-çул пурнăçланмасăр юлать. 1950 çулта гидроэлектростанцисем лартмалли плана 74 процент çеç тултарнă. 1951 çулта та планра кăтартнă ĕçсене нумайăшне пурнăçламан.

Районти организацисем, республикăри Ялхуçалăх министерствипе Госплан çаплах электростанцисем тума палăртас, строительствăна планлас ĕç çине тимлĕ пăхмаççĕ. Колхозсенче организаци енчен япăх хатĕрленнĕ пирки 1951 çулта тума палăртнă нумай гидроэлектростанцисене (Тăвай районĕнчи Кĕршере, Советски районĕнчи Мăн Чурашра, Мăн Ямашра) тума тытăнма май килмен. Çакăн евĕрлĕ çитменлĕхсем ан пулччăр тесен, 1952 çулта электростанцисем ăçта тумаллине палăртнă чухне тимлĕ пăхни кирлĕ.

Проектсем хатĕрлекен кантур вăхăтра проектпа смета докуменчĕсене хатĕрлемен пирки 1951 çулта хăшпĕр электростанцисене тума кая юлса тытăннă. Сăмахран, Çĕрпÿ районĕнчи Рынкăри ГЭС проектне июнь вĕçĕнче тин, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Дубовкăпа Утаркассинче тумалли ГЭСсен проекчĕсене июль уйăхĕнче тин илнĕ. Çавăн пирки строительство ĕçне анлăн туса ямалли чи лайăх вăхăта иртерсе янă.

1952 çулта тумалли электростанцисен проектпа смета докуменчĕсене хатĕрлес ĕç тата япăхрах пырать. Районти ялхуçалăх пайĕсем çывăх çулсенче çĕнĕ электростанцисем тума тĕпчев ĕçĕсене, проектсене малтанах хатĕрлесе хума кирли çинчен колхозсене ăнлантарса памаççĕ. Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин проектнăй кантурĕ çитес çул тумалли 4 гидроэлектростанци проектне çеç хатĕрленĕ.

Кантурăн проектсене вăхăтра туса хатĕрлемелле, вĕсен пахалăхне лайăхлатмалла, типовăй проектсемпе анлăрах усă курса проектсен хакне йÿнетмелле.

Проектнăй кантурăн гидроэлектростанцисем тума арман пĕвисемпе усă курма палăртнă чухне тимлĕ пăхас пулать. Чылай чухнĕ электростанцие туса пĕтернĕ хыççăн кивĕ пĕве шыв тытса тăма юрăхсăр пулни палăрать. Сăмахран, Çĕрпÿ районĕнчи Çĕньялта çавăн пек пулнă. Проектнăй кантурăн гидроэлектростанцин хăватне палăртнă чухне республикăри юханшывсен вăйне тĕплĕ шута илмелле. Хăшпĕр чухне проектпа палăртнă гидротурбинăсене ĕçлеттерме шыв çителĕксĕр пулни курăнать. Пĕчĕк турбина улăштарса лартма вара колхозсен тепĕр хут укçа-тенкĕ пĕтерме тивет.

Электростанцисем лартнă чухне строительство материалĕсене вăхăтра хатĕрлемени те пысăк чăрмав кÿрет. Колхоз председателĕсемпе ГЭС совечĕн председателĕсем строительство материалĕсене кĕркуннепе кĕллехи вăхăтра хатĕрлес вырăнне çулла тин хатĕрлесе турттарма пăхаççĕ. Сăмахран, план-график тăрăх, Октябрьски (Тăвай районĕ) ГЭС-ĕн 1950—51 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра 2.640 кубометр чул, 700 кубометр хăйăр, 200 кубометр йывăç хатĕрлемелле пулнă. Чăннипе вара çуна çулĕ пĕтиччен пурĕ те 60 кубометр чул тата 10 кубометр йывăç турттарса кăларнă пулнă. Çавăн пирки асăннă ĕçсене тума çулла, хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче ĕç вăйĕ уйăрма тивнĕ, станцие тума июль уйăхĕнче кăна тытăннă. Çавна пула çулла, ăшă вăхăтра тумалли ĕçсене сивĕ чухне тумалла пулнă. Ку вăл ĕç пахалăхне чакарать, расходсене ÿстерет.

Гидроэлектростанцисем тума райпланисем урлă илекен йывăçа вăхăтра çителĕклĕ хатĕрлеймеççĕ. Сĕнтĕр районĕнчи Эмеккасси, Çĕмĕрле районĕнчи Чăваш Улхашĕ, Элĕк районĕнчи Вырăс Сурăм ГЭС-ĕсем валли ку таранччен йывăç çителĕклĕ хатĕрлемен. Йывăç çитмен пирки хăшпĕр туса пĕтернĕ ГЭС-сене те ĕçлеттерме тытăнма май килмест.

Стройкăсем валли строиматериалсем вăхăтра хатĕрлес шутпа, Госпланăн вăхăтра, кĕркуннех районсене йывăç хатĕрлемелли фондсем уйăрса памалла, вăл шутра ятарласа электростанцисем тума кирлĕ фонда палăртмалла. ГЭС тăвакан е çитес çул тума тытăнакан колхозсен хăйсене кирлĕ строительство материалĕсене кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра хатĕрлесе, турттарса хумалла.

Строительство ĕçĕ ăнăçлă пырасси оборудовани, электроматериалсем, тимĕр вăхăтра кÿрсе килнинчен те нумай килет. Çак материалсене колхозсен Чăвашпотребсоюз урлă илсе тăмалла. Сельэлектро кантурĕ заявкăсем панă пулин те, Чăвашпотребсоюз çав материалсене кÿрсе килмест. Малашне Чăвашпотребсоюз кирлĕ чухлĕ тимĕр трубасем, çурт-çине витмелли материалсем кÿрсе килме тивĕçлĕ.

Нумай стройкăсенче çынсем ĕçлеме сахал тухни плана тултарма чăрмантарать. Пăрачкав районĕнчи Куденха, Тăвай районĕнчи Чутей тата ытти ГЭС-сене тунă çĕрте рабочисем уйăрмалли графика тăтăшах пăсаççĕ. Колхозсем строительствăра ĕçлеме вăхăтран-вăхăта çеç çынсем уйăраççĕ, ĕçлекенсем час-часах улшăнса тăраççĕ. Çакă вăл ĕç тухăçлăхне тата пахалăхне нумай чакарать. Электростанци тăвакан колхозсен строительство çине тимлĕ пăхмалла, Чăвашсельэлектро кантурĕпе тунă договора çирĕп пурнăçламалла, строительство бригадисене ялан ĕçлемелле уйăрмалла. Чылай стройкăсенче çулла тата кĕркунне кăна ĕçлеççĕ. Малашне ун пек тумалла мар, хĕлле те ĕçлеме чарăнма юрамасть. Калас пулать, хăшпĕр ĕçсене (котлован чавма, свай çапма) хĕлле пурнăçлама çăмăлрах тата йÿнерех парать.

Строительство ĕçĕсене кăвартлатма механизмсемпе тулли усă курмалла, йывăр ĕçсене май килнĕ таран ытларах механизацилемелле. Анчах та нумай стройкăсенче механизмсемпе çителĕксĕр е пачах япăх усă кураççĕ. Сăмахран, Чăваш Улхашĕ ГЭС-не тунă çĕрте (аслă прораб С. Григорьев юлташ) дизельмолот чылай вăхăт хушши юсавлă мар пирки ĕçлемен, юсавлă дизелькоперпа сахал усă курнă. Лебедка, дизельмоторпа пасÿс вара пачах ахаль ларнă.

Тăвай районĕнчи Октябрьски ГЭС-не тунă çĕрте те механизмсемпе начар усă кураççĕ. ГЭС совечĕн председателĕ С. Данилов юлташ локомобиль валли топливо тупса пама килĕшмен пирки, локомобиль, хăма çуракан рама, электростанци икĕ çул ĕнтĕ ахаль лараççĕ. Çав вăхăтрах хăма çурма тытнă çынсене тÿлесе темиçе пин тенкĕ укçа, нумай тырă пĕтернĕ.

Строительство ĕçĕсене механизацилессине кирлĕ пек хакламалла. Сельэлектро кантурĕн механизмсене строительствăна илсе пырас ĕçе лайăхрах планламалла. Механизмсемпе ĕçлеме ăста кадрсем тупса памалла, механизмсене вăхăтра юсаса вĕсене тухăçлă ĕçлеттермелле.

Темиçе колхоз пĕрле тăвакан ГЭС-сен строительство ĕçĕсене ГЭС совечĕсем ертсе пыраççĕ. Анчах та ГЭС совечĕсен ĕçне ертсе пыни, тĕрĕслени çук, строительствăна хутшăнакан колхозсем тата районти организацисем вĕсене кирлĕ пек пулăшмаççĕ. Правительство йышăннă тăрăх, ГЭС совечĕсен ĕçне ревизи комиссийĕсем кашни кварталта пĕр хутран кая мар тĕрĕслемелле, ревизи результачĕсене колхозниксен пухăвĕсенче сÿтсе явмалла. Анчах та нумай ГЭС-сем тунă çĕрте ревизи комиссийĕсене суйламан е вĕсем хăйсен ĕçне тивĕçлипе туса пымаççĕ. Малашне ревизи комиссийĕсен ĕçне вăйлатмалла. ГЭС совечĕсем материалсемпе укçа-тенкĕне тĕрĕс расходланине, Сельэлектро кантурĕпе тунă договора икĕ енчен те çирĕп пурнăçланине тăтăшах тĕрĕслемелле.

Пирĕн республикăра торф нумай, анчах унпа ялхуçалăхне электрификацилес ĕçре ку таранччен усă курмаççĕ. Малашне вырăнти топливăпа, уйрăмах торфпа ĕçлекен пысăк теплоэлектростанцисем тума тытăнмалла.

Инженер Д. СЕЛИХОВ.

„Чăваш Коммуни" хаçатра çырнă хыççăн

„Республика бюджетне ăнăçлă тултарассишĕн"

«Чăваш Коммуни» хаçатра декабрĕн 8-мĕшĕнче пичетленсе тухнă «Республика бюджетне ăнăçлă тултарассишĕн» ятлă умстатьяна çак кунсенче ВКП(б) Шăмăршă райком бюровĕн ларăвĕнче сÿтсе явнă. Райком бюровĕ умстатьяра района тивĕçлипе критикăланине палăртнă.

Укçа-тенкĕ пухассине вăйлатас шутпа декабрĕн 15—25-мĕшĕсенче районта укçа-тенкĕ пухмалли вунăкунлăх иртернĕ. Вырăнсенчи партипе совет организацийĕсене ĕçре пулăшма районти парти активĕнчен ялсене 24 çын янă.

ВКП(б) райком бюровĕ район Совечĕн исполкомне районти финанс пайĕнчи работниксен тата финанс агенчĕсен ĕçри ответлăхне ÿстерме, укçа-тенкĕ пухмалли плана пур енĕпе те тултармалла тума хушнă.

Райком бюровĕ партин пуçламăш организацийĕсене укçа-тенкĕ пухас ыйтупа массăлла-политикăллă ĕçе вăйлатма, укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарассишĕн çине тăрса ĕçлеме, ялсенче укçа-тенкĕ пухасси çине уйрăмах тимлĕ пăхма хушнă.

Парти райкомĕн бюровĕ укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарасси мĕнле пыни çинчен ВКП(б) райкомĕн бюровĕнче час-часах сÿтсе явма йышăннă.

«Республика бюджетне ăнăçлă тултарассишĕн» ятлă умстатьяна çавăн пекех финанс работникĕсемпе ялсенчи активистсен канашлăвĕсенче сÿтсе явнă.

„Тракторсене юсас ĕçе вăраха ямалла мар"

Ноябрĕн 20-мĕшĕнче «Чăваш Коммуни» хаçатра «Тракторсене юсас ĕçе вăраха ямалла мар» ятлă статья пичетленнĕччĕ. Статьяра Вăрмар машина-трактор станцийĕнче тракторсене юсасси сÿрĕккĕн пынине, МТС-ри парторганизаци механизаторсем хушшинче партиллĕ-массăллă ĕçе кирлĕ пек туса пыманнине, трактористсем валли докладсемпе лекцисем сайра хутра çеç иртернине кăтартса панăччĕ.

«Тракторсене юсас ĕçе вăраха ямалла мар» ятлă статьяна ВКП(б) Вăрмар райком бюровĕн ларăвĕнче сÿтсе явнă. Райком бюровĕ МТС директорне Гордеев юлташа тата пуçламăш парторганизаци секретарьне Виктимиров юлташа статьяра асăннă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушнă.

„Красное пламя" колхоз мĕншĕн аталанмасть"

«Чăваш Коммуни» хаçатра ноябрĕн 25-мĕшĕнче пичетленсе тухнă «Красное пламя» колхоз мĕншĕн аталанмасть» ятлă статьяна ĕçсыннисен депутачĕсен Канаш район Совет исполкомĕн ларăвĕнче сÿтсе явнă. Район Совечĕн исполкомĕ статьяра колхозри çитменлĕхсене тĕрĕс критикăланине палăртнă, колхоз председательне Александров юлташа артель хуçалăхне ертсе пырассине лайăхлатма, тырпул тухăçне тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçне ÿстерессишĕн тивĕçлĕ мерăсем йышăнма, государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана вăхăтра тултарса пыма, артелĕн хушма хуçалăхне вăйлатма хушнă.

Район Совечĕн исполкомĕ çавăн пекех районти ялхуçалăх пайне «Красное пламя» колхоза ĕçре пулăшассине вăйлатма хушнă.

Кашни колхозăн вăйлă утар пулмалла

Республикăри хурт-хăмăр ăстисен канашлăвĕнчен

Çак кунсенче Шупашкарта хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсен республикăри канашлăвĕ пулчĕ. Канашлу 1951 çулхи ĕçсен итогĕсем тата Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче пыл хурчĕсем ĕрчетес тĕлĕшпе умра тăракан задачăсем çинчен сӳтсе яврĕ. Ку ыйтупа Чăваш АССР Ялхуçалăх министрĕ Г. Мартынов юлташ доклад турĕ.

Хурт-хăмăр ĕрчетни колхозсен хуçалăхне малалла вăйлатас ĕçре пысăк вырăн йышăнать. Пыл хурчĕсем ĕрчетни артельсен укçа-тенкĕ тупăшне ӳстерме май парать. Кунсăр пуçне пыл хурчĕсем клевера, люцернăна, хуратула, садри çимĕç йывăççисене тата ытти ӳсентăрансене шăркалантараççĕ, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерме пулăшаççĕ.

Пирĕн республикăри пур колхозсенче те хурт-хăмăр ĕрчетме лайăх условисем пур. Красноармейски, Елчĕк, Чкаловски районĕсенчи малта пыракан колхозсен опычĕ çĕçенхирлĕ районсенче те хурт-хăмăра лайăх ĕрчетме май пуррине кăтартса парать.

Республикăри колхозсем 1951 çулта кашни хурт-хăмăр çемйинчен вăтам шутпа 33,4-шер килограмм пыл пухса илчĕç, государство планне ирттерсе тултарчĕç. Вуникĕ район—Первомайски, Çĕмĕрле, Канаш, Йĕпреç, Етĕрне, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Хĕрлĕ Чутай, Красноармейски, Чкаловски, Элĕк, Муркаш районĕсем пыл хурчĕсен йышне ӳстермелли, пылпа ăвăс илмелли государство планне пĕтĕмĕшпех тултарнă. Первомайски районĕ хурт-хăмăр çемйисен шутне ӳстермелли плана 104,5 процент тултарнă. План тăрăх 29-шар килограмм илмелле пулсан, кашни хурт-хăмăр çемйинчен 55,5-шер килограмм пыл илнĕ.

Етĕрне районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан колхозра юлашки виçĕ çул хушшинче хурт-хăмăр çемйисене 70-рен 181 çемьене çитернĕ. Кăçал кашни çемьерен 45-шер килограмм пыл илнĕ. Канаш районĕнчи Доронин ячĕпе тăракан колхозра хурт-хăмăр çемйисен хисепĕ 600-тен иртет. Артель 12 тонна тасарлă пыл пухса илнĕ.

Йĕпреç районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхозра 128 хурт-хăмăр çемйинчен кашнинчен вăтам шутпа 74-шар килограмм пыл, 1,2-шер килограмм ăвăс пухса илнĕ. Хурт-хăмăр ăсти У. Осипова юлташ çу каçиччен пыл хурчĕсен йышне 43 çемьерен 74 çемьене çитернĕ. Вĕсенчен кашнинчен план тăрăх 29 килограмм пыл илме палăртнă пулсан, 84-шар килограмм пыл, 1,4-шар килограмм ăвăс пухса илнĕ. Хуртсене хăвăрт ĕрчетмелли меслетпе усă курса, Осипова юлташ 5 çемьерен çĕнĕрен 17 семье кăларнă, 41-мĕш номерлĕ çемьерен 4 çĕнĕ çемье кăларнă, вĕсенчен 180 килограмм пыл пухса илнĕ. Осипова юлташ вăйлă çемьесене анчах тытать, хуртсене лежак-вĕллесенче усрать, вĕллесене ăшă тытмалла тăвать. Кашни хурт-хăмăр çемйи валли хĕл каçма 20 килограмран сахал мар пыл хăварать. Çуркунне вĕллесене кăларса лартнă чухне кашни çемьене валли 5 килограмран сахал мар пыл хăварать. Вĕллесене яланах таса тытать. Амасене лайăх ĕçлекен çемьерен çеç кăлараççĕ. Утарта хуртсене хăвăрт ĕрчетеççĕ, икĕ корпуслă вĕллесенче усраççĕ.

Çĕмĕрле районĕнчи «Комбинат» колхозра 1951 çулта хурт-хăмăр йышне 547 çемьене çитернĕ. Колхоз 17 тонна яхăн таварлă пыл пухса илнĕ. Колхоз утартан илекен тупăш 250 пин тенке çитет. Колхозниксене ĕçкунĕ çине 50-шар грамм пыл валеççе панă. Хурт-хăмăр ăстисене ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх икĕ тонна яхăн пыл, 9 хурт-хăмăр çемйи тивет.

Первомайски районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозра хурт-хăмăр йышне 125 çемьерен 162 çемьене çитернĕ. Кашни çемьерен 71-шер килограмм пыл пухса илнĕ. Колхоз 1951 çулта хурт-хăмăртан 150 пин тенке яхăн таса тупăш илнĕ.

Шупашкар районĕнчи «Память Кирова» колхозри хурт-хăмăр ăсти Филиппов, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Молния» колхозри хурт-хăмăр ăсти Майоров тата ытти юлташсем те пысăк çитĕнӳ тунă.

Малта пыракан колхозсенче вĕллесене клевер, люцерна акнă уя илсе тухаççĕ, хуртсене клевер чечекĕсем çинчен пыл илме хăнăхтараççĕ. Çакă вăл пысăк тухăçлă курăк вăрри пухса илме май парать.

Анчах та республикăри пур колхозсенче те пыл хурчĕсем ĕрчетес ĕçе çавăн пек тимлĕ туса пымаççĕ. Пăрачкав районĕ вăрçăччен хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе малта пыракан районсенчен пĕри пулнă. Халĕ вăл районти колхозсенче хурт-хăмăр йышĕ вăрçăченхи çулхинчен икĕ хута яхăн чакнă. Улатăрпа Кувакино районĕсенчи колхозсенче те хурт-хăмăр çемйисем вăрçăченхи хисепе çитмен.

Калинино, Куславкка, Октябрьски, Советски, Шăхасан районĕсенчи ялхуçалăх пайĕсем тата хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен агрономсем ĕçе япăх ертсе пыраççĕ. Çав районсем пыл хурчĕсем ĕрчетмелли плана тултарман. Октябрьскипе Куславкка районĕсенче уйрăмах иртнĕ хĕллепе çуркунне хурт-хăмăра кирлĕ пек пăхман, чылай хурт-хăмăр çемйисем пĕтнĕ.

Республикăри 164 колхозра (мĕнпур колхозсенчен 19 процентĕ) пачах хурт-хăмăр ĕрчетмеççĕ. Нумай колхозсенче утарсем ытла та пĕчĕккĕ. Сăмахран, Элĕк районĕнчи «Çутталла» колхоз 1948 çултанпа икĕ çемье хурт тытать. 1951 çулта районта вăтам шутпа кашни çемьерен 35-шер килограмм пыл илнĕ пулсан, «Çутталла» колхозра вара, 12-шер килограмм кăна пыл пухса илнĕ.

Хурт-хăмăра йăнăçлă хĕл каçарасси, чи малтан, çителĕклĕ апат хăварнинчен килет. Первомайски, Етĕрне районĕсенче кăçал кашни хурт-хăмăр çемйи пуçне йăвара 20-шер килограмм пыл тата страховой фондра—3-шер килограмм пыл хăварнă. Анчах та хăшпĕр колхозсенче пыла «перекетлеççĕ», пыл хурчĕсем валли апат сахал хăвараççĕ. Елчĕк, Калинино, Вăрмар районĕсенче страховой фонда пыл питех те сахал хăварнă. Çавăн пек «перекетлеме» тăрăшни хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçе пысăк сиен кӳрет.

Пыл хурчĕсене хĕл каçарма типĕ, лайăх хĕл пӳрчĕсем кирлĕ. Хальхи вăхăтра республикăри чылай утарсенче çавăн пек çуртсем çук. Ку тĕлĕшпе ĕçсем уйрăмах Ишлей, Куславкка, Октябрьски районĕсенче япăх. Çитес кĕркуннеччен кашни колхоз утарĕнчех хуртсене хĕл каçармалли лайăх çуртсем туса хатĕрлемелле.

Республикăра вĕллесем тăвас ĕçе япăх йĕркеленĕ. Чылай колхозсенче хурт-хăмăр йышне вĕллесем пулман пирки ӳстерейменççĕ. Республикăра вĕллесем тумалли плана иртнĕ çулта çуррине те тултарайман. Вырăнти промышленность министерствипе промысла артелĕсем вĕллесем сахал тăваççĕ, вĕсем те хаклă, пахалăхĕ япăх. Малашне кашни колхозрах вĕллесем тата ытти инвентарь тума мастерскойсем пулмалла, ку тĕлĕшпе хурт-хăмăр ăстисен хăйсен ĕçлемелле.

Пыл хурчĕсем валли ятарласа пыл паракан курăксем (фацели, донник) нумайрах акма тытăнмалла. Красноармейски районĕнчи Мичурин ячĕпе, Молотов ячĕпе тăракан, «Победа» колхозсенче фацелие çуркунне çĕртме пуссинче акаççĕ, çапла вара пыл нумай пухса илеççĕ. Фацелие тата пыл паракан ытти курăксене утарта, садсенче тата ытти çĕрте те акма пулать. Фацелие тĕрлĕ вăхăтра акни лайăх, хуртсем çу каçипех унтан пыл илме пултараççĕ.

Пыл хурчĕсен йăхне лайăхлатас ĕçе вăйлатмалла, пыл нумай пухакан çемьесенчи амасене ĕрчетмелле.

Хуртсене чирсем ересрен сыхланас тĕлĕшпе утарсенче тасалăхшăн тăрăшни кирлĕ.

Докладчик тата пренире тухса калакансем хурт-хăмăр ăстисене вĕрентсе хатĕрлес ĕç япăх пынине палăртрĕç. Районсенчи ялхуçалăх пайĕсем ку ĕçе çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. 1951 çулта кадрсем хатĕрлемелли плана 40 процент çеç тултарнă. Куславкка, Вăрмар, Пăрачкав районĕсенче пĕлтĕр пĕр çын та вĕрентсе хатĕрлемен. Вăрнарти хурт-хăмăр ăстисене хатĕрлекен шкултан вĕренсе тухнă çынсене хăшне пĕрне утарсенче ĕçлеттермеççĕ. Колхозсенче ватă хурт-хăмăр ăстисем çумĕнче çамрăксене ĕçлеме вĕрентессине йĕркелемелле.

Утарсенче ĕçлекенсене ĕçшĕн тĕрĕс тӳлессине йĕркелемелле. Районсенчи ялхуçалăх пайĕсен ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕркепе пама тивĕçлĕ пыла колхозниксене мĕнле панине тĕрĕслемелле, çав йĕркене çирĕп пурнăçа кĕртмелле.

* * *

Канашлура тухса калакансем хăйсен ĕçĕнчи опытсем çинчен каласа пачĕç, хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли майсене палăртрĕç.

Çĕмĕрле районĕнчи агроном-пчеловод Гришин юлташ пыл хурчĕсене икĕ корпуслă вĕллесенче, лежак-вĕллесенче усрани пыл нумай илме май панине кăтартакан тĕслĕхсем илсе кăтартрĕ. Пыл хурчĕсем шăркалантарнă май, чылай колхозсенче клевер вăрри лайăх пулнă. «Знамя Ленина» колхоз гектартан 5-шер центнер, «Большевик» колхоз—20 гектар çинчен кашни гектартан 4,6-шер центнер клевер вăрри пухса илнĕ.

Çĕмĕрле районĕнчи «Комбинат» тата Шупашкар районĕнчи «Красный герой» колхозсенчи хурт-хăмăр ăстисем Ванюковпа Пчелкин юлташсем хуртсене икĕ корпуслă вĕллесенче тытни икĕ хут ытларах пыл илме май пани çинчен каларĕç.

— Чкаловски районĕнчи колхозсем,—тет агроном-пчеловод Аючатова юлташ,—иртнĕ хĕлле хуртсене тĕрĕс-тĕкел хĕл каçарчĕç. Район хурт-хăмăр ĕрчетмелли плана 106 процент, çавăн пекех пылпа ăвăс илмелли плана та ирттерсе тултарчĕ. Хурт-хăмăр ăстисем малта пыракансен опычĕпе усă курма тăрăшаççĕ, хăйсен пĕлĕвне ӳстереççĕ. Хăшпĕрисем хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен институтра çулталăклăх курсра заочно вĕренеççĕ.

Первомайски районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозри хурт-хăмăр ăсти Иванов юлташ нумай рамăллă вĕллесем лайăхрах пулни çинчен калать.

— Малтан пирĕн 12 рамăллă вĕллесемччĕ. Вĕсемпе ĕçлеме кансĕр,—тет вăл.—Эпир 14 тата 16 рамăллă вĕллесем çине куçрăмăр. Халĕ пирĕн лежак-вĕллесем анчах. Икĕ корпуслă вĕллесем лартса пăхрăм. 12 рамăллă вĕллерен пĕр çемьерен 64 килограмм пыл илнĕ пулсан, 16 рамăллă вĕллерен пĕр çемьерен 150 килограмм таран пыл илтĕм.

Иванов юлташ çавăн пекех социализмлă ăмăрту договорне тĕрĕслеме Мари республикине кайни çинчен, Тутар республикинче опытлă станцине кайса çӳрени çинчен каласа кăтартрĕ.

Агроном-пчеловод Ванюков юлташ Элĕк районĕнчи чылай колхозсем хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç çине çителĕксĕр пăхнине палăртать. Çавăнпа та хăшпĕр колхозсем плана тултарайман, хуртсем валли хăварнă пыла салатса пĕтереççĕ.

Вăрнар районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Семенов юлташ ялхуçалăх специалисчĕсен колхозсенче хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç çине тимлĕрех пăхма кирлине палăртать.

— Хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен кантурăн,—тет Семенов юлташ,—колхозсен утарĕсем валли кирлĕ инвентарьпе материалсем тупса парас тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлемелле.

Çĕрĕç органĕсемпе МТС-сенче ĕçлекенсен профсоюз обкомĕн председателĕ Светлов юлташ малта пыракан хурт-хăмăр ăстисен опытне сарас тĕлĕшпе ытларах ĕçлеме кирлине палăртать.

Пренире тухса калакансем çакна палăртрĕç: чылай районсенче ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем колхозсенче хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç çине кирлĕ пек пăхмаççĕ. Колхоз руководителĕсем хурт-хăмăр ăстисене çителĕклĕ пулăшмаççĕ, утар хуçалăхне вăйлатмаççĕ.

Мари республикинчи хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен кантур начальникĕ Анланов юлташ канашлăва пухăннисене Мари АССР-ĕнчи хурт-хăмăр ăстисен ячĕпе саламларĕ.

— Чăваш тата Мари республикисенчи хурт-хăмăр ăстисем пĕр-пĕринпе социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ,—тет вăл.—Тĕрĕсленĕ хыççăн, 1951 çулта Чăваш республикинчи хурт-хăмăр ăстисем мала тухни палăрчĕ. Эпĕ сирĕн республикăри хурт-хăмăр ăстисен хастарлă ĕçĕ çинчен тимлĕ итлерĕм. Осипова юлташ кашни хурт-хăмăр çемйинчен 84-шар килограмм пыл пухса илнине уйрăмах палăртмалла. Кашни çемьерен 28-шар килограмм пыл илекенсемпе танлаштарсан, вăл 4 çыншăн ĕçленĕ. Пирĕн çавăн пек ĕçлекенсенчен вĕренмелле. Çапла ĕнтĕ утарти ĕçе лайăх йĕркелесен, кашни çемьерен, хăшпĕрисем пек, 30-шар килограмм мар, темиçе хут ытларах пыл пухса илме май пур.

— Мари республикинче те пыл хурчĕсем ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçлекенсем пур. Сотнурски, Волжск, Еласы районĕсенчи пур колхозсенче те утарсем пур. Утарта вăтам шутпа 150-шар çемье ытла шутланать. Пĕр колхозра хурт-хăмăр йышĕ 800 çемьене çитнĕ. Пирĕн республикăри хурт-хăмăр ăстисем те, сирĕн пекех, 1952 çулта социализмлă ăмăртура мала тухассишĕн, пĕлтĕрхинчен пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлĕç.

Канашлура çавăн пекех Баранов (Канаш районĕнчи «Комбайн» колхозран), Воронцов (Йĕпреç районĕнчи агроном-пчеловод), Пирогов (Сĕнтĕрвăрри районĕнчи агроном-пчеловод), Степанов (Чкаловски районĕнчи «Красное знамя» колхозри хурт-хăмăр ăсти), Башмаков (Сĕнтĕр районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозран), Иванов (Вăрнарти ялхуçалăх техникумĕнчен), Тибогайкин (Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Андреев ячĕпе тăракан колхозран), Федоров (Тăвай районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозран), Романов (Комсомольски районĕнчи Ульянов ячĕпе тăракан колхозран), Вашуров (Сĕнтĕр районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозран), Романов (Первомайски районĕнчи агроном-пчеловод), Искандеров (Тутар АССР-ĕнчи хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен кантур зоотехникĕ), Козлов (Елчĕк районĕнчи агроном-пчеловод), Запольский (Республикăри хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен кантур начальникĕ) тата ытти юлташсем те тухса каларĕç.

Юлашкинчен канашлура ВКП(б) обком секретарĕ Н. А. Шмаков юлташ хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинчен сăмах тухса каларĕ.

Канашлура пулнисем республикăри колхозсенче хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе 1952 çул валли социализмлă обязательствăсем йышăнчĕç, Мари республикинчи хурт-хăмăр ăстисене социализмлă ăмăртăва чĕнчĕç.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ пирĕн республика умне ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Çав задачăсене пурнăçлама çĕрĕç культурине чылай лайăхлатмалла, курăк акмалли уйлă пусă çаврăнăшĕсене йĕркелемелле, выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлемелле. Ку ĕçсене ăнăçлă пурнăçлама нумай çул ӳсекен курăк вăрлăхĕсем кирлĕ. Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçе лайăхлатса, пысăк тухăçлă курăк вăррисем туса илме пулăшасси—хурт-хăмăр ăстисен хисеплĕ задачи.

Пирĕн республикăри хурт-хăмăр ăстисем вăрçă умĕнхи çулсенче пысăк çитĕнӳсем туса мухтава тивĕçлĕ пулнăччĕ. Канашлу çапла шутлать: çав мухтава тепĕр хут çĕнсе илесси, хурт-хăмăр йышне вăрçăченхи хисепрен ирттересси—чи кирлĕ задача пулса тăрать. Кашни колхозрах утар пулмалла, унта хурт-хăмăр йышĕ 50 çемьерен кая мар пулмалла. Хурт-хăмăр ăстисен çитес çулсенче кашни хурт-хăмăр çемйинчен 5-шер пăтран кая мар пыл илессишĕн кĕрешмелле.

* * *

Канашлу хыççăн Чăваш АССР Ялхуçалăх министерстви малта пыракан хурт-хăмăр ăстисене, районсенчи ялхуçалăх специалисчĕсене укçа парса премилерĕ. Хурт-хăмăр ăстисем 1952 çулта тата пысăкрах çитĕнӳсем тума пулчĕç. Йĕпреç районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхозри хурт-хăмăр ăсти У. Осипова, Çĕмĕрле районĕнчи «Комбинат» колхозри хурт-хăмăр ăсти Ванюков юлташсем 1952 çулта кашни хурт-хăмăр çемйинчен 100-шер килограмран кая мар пыл пухса илме сăмах пачĕç.

Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автозаводра.

Люблинăри токарьсем А. Жандаровăпа О. Агафонова пуçарнă ĕçе ырласа, заводра çĕршер рабочи производствăри кашни операцие питĕ лайăх тăвассишĕн ăмăртаççĕ. Контролер Г. М. Лукьянова станоксем çумĕнчи хатĕрсене пĕрмаях тĕрĕслесе тăма сĕннĕ, çапла питĕ лайăх продукци ытларах туса кăларма пуçланă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: контролер Г. М. Лукьянова, механик Г. М. Орлов тата слесарь И. Х. Шойхет станоксем çумĕнчи хатĕрсене тĕрĕслеççĕ.

В. ЗУНИН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Канаш хулинче

М. Левченкопа Г. Муханов пуçарăвĕпе ĕçлесе

«Швейник» артельре перекетлĕх режимне çирĕплетессишĕн пыракан ăмăртăва тумтирсем çĕлекен цех коллективĕ пуçарса ячĕ. Çак цехри Никифоровăпа Михайлова юлташсем ертсе пыракан çĕвĕ çĕлекенсен бригадисем çиелти тумтирсене поток меслечĕпе çĕлеме тытăнчĕç. Ку вăл ĕç тухăçлăхне нумай ӳстерме пулăшрĕ. Унччен кашни çĕвĕçĕ сменăра пĕрер ача пальтовĕ çĕленĕ пулсан, халĕ 1,5 е 2 пальто çĕлеççĕ. Ĕç тухăçлăхĕ ӳсни продукци хăйне лараках хакне чылай чакарнă. Кашни бригада членĕ валли лицевой счетсем уçнă. Унта вăл мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ перекетлесе хăварнине çырса пыраççĕ.

Чĕртавар перекетлес тĕлĕшпе Трофимов закройщик лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Вăл материалсене тирпейлĕн тыткалать, декабрь уйăхĕнче 94 метр материал перекетлесе хăварнă, унпа ачасем валли 30 пальто çĕлеме пулать.

Трофимов закройщикăн тата Никифоровпа Михайлова çĕвĕçсен бригадисен опычĕпе халĕ артель членĕсем пурте усă кураççĕ.

Йывăр составсем илсе çӳреççĕ

Депо коллективĕ стахановла ĕçлеме тăрăшать.

Декабрьти çирĕм кун хушшинче П. Николаев машинист 18 йывăр состав ăсатнă, нормăран ирттерсе 3.278 тонна груз турттарнă. Çав вăхăтрах СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ П. Назаров юлташ 12 йывăр состав илсе кайнă, нормăран ирттерсе 2.267 тонна груз турттарнă, 17 тонна çĕр кăмрăкĕ перекетленĕ.

Врачсен конференцийĕ

Çак кунсенче хулари врачсен конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференци участникĕсем Канаш хула Совет исполкомĕн сывлăх пайĕн заведующийĕ Перекрестова юлташ хулара халăх сывлăхне сыхлас ĕç çинчен тунă доклада тата хула поликлиникинчи врач-окулист Шестакова юлташ трахома чирĕпе кĕрешес ĕç çинчен тунă доклада сӳтсе яврĕç.

Пренире 15 çын тухса каларĕç. Вĕсем халăх сывлăхне сыхлас ĕçри çитменлĕхсене палăртрĕç тата çак ĕçе лайăхлатмалли майсем çинчен каларĕç.

Хулари ĕççыннисем валли лекцисем

Хулари лекторсен вăйĕпе юлашки уйăхсенче ĕççыннисене 56 лекци вуласа панă, вĕсене 10 пин çынна яхăн итленĕ. Ĕççыннисем наукăллă темăсемпе вуланă лекцисене питĕ юратса итлеççĕ. Юлашки вăхăтра «Çĕр çинче пурнăç пуçланса кайни», «Этем анатомийĕпе физиологийĕ» тата ытти темăсемпе лекцисем вуласа панă.

Нумай лекторсем хăйсен ĕçне тăрăшса туса пыраççĕ. Сăмахран, икĕ уйăх хушшинче Косицын юлташ 10 лекци, Макарова юлташ 7 лекци вуланă. Çавăн пекех Ермошкина, Емельянов тата ытти лекторсем те лайăх ĕçлеççĕ.

Хулари пропагандистсен канашлăвĕ

Çак кунсенче хулари пропагандистсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Синицын юлташ хулари парторганизацире партиллĕ пропаганда ĕçĕ мĕнле пыни çинчен доклад туса пачĕ.

Доклад хыççăн пропагандистсем пĕрпĕрин ĕç опычĕпе паллашрĕç.

Канашлу хыççăн учительсен институчĕн преподавателĕ Грищенко юлташ методика ыйтăвĕ тăрăх лекци вуласа пачĕ.

И. ЖАДЕЦКИЙ, С. АСЛАН.

Ыйтусемпе ответсем

Электроннăй микроскоп çинчен

„Чăваш Коммуни" хаçата вулакан А. Васильев юлташ (Канаш хули) ыйтăвĕ çине ответлетпĕр

Çутçанталăка сăнаса вĕренсе ĕçре микроскоп, ытти приборсемпе пĕрле, питĕ кирлĕ. Микроскопа эпир пĕчĕкрен те пĕчĕк япаласене курма пултаратпăр, вĕсене лайăхрах тĕпчеме пултаратпăр. Ахаль куçпа курма çук бактерисене микроскоп витĕр курма пулать. Çапла майпа эпир бактерисем мĕнлине тата мĕнле пурăннине пĕлсе, сиенлисемпе ăнăçлăн кĕрешме пултаратпăр.

Ку таранччен пуринчен ытла кĕленче линзăсемлĕ микроскопа усă курнă. Пĕчĕк япаласене сăнанă чухне микроскопра çутă пайăркисемпе усă кураççĕ. Калăпăр, пирĕн кӳлĕри шыври ахаль куçа курăнман чĕрчунсене е ытти пĕчĕк япаласене тĕпчесе пĕлмелле. Çак шыва, кĕленче çине тумлатса, микроскоп аял вĕçне вырнаçтарса хуратпăр. Ун çине вара çутă пайăркисем ӳкмелле тăватпăр. Çутă пайăркисем кĕленче витĕр те, шыв витĕр те пĕр чарăнмасăр тенĕ пекех тухаççĕ. Анчах шыври пĕчĕк чĕрчунсене (е урăх япаласене) лекнĕ çутă пайăркисем чарăнса тăраççĕ, çутă пайăркисене кĕленче çине тумлатнă шыври чĕрчунсем чараççĕ.

Кĕленчепе шыв витĕр тухнă çутă пайăркисем микроскопăн тепĕр вĕçне, эпир куçпа пăхакан тĕле çитеççĕ. Анчах чĕрчунсем чарнă çутă пайăркисем пирĕн куç патне çитеймеççĕ. Линзăсем пулăшнипе çутă пайăркисене чарнă вырăнсем (шыври чĕрчунсем е урăх япаласем) микроскопăн куçпа пăхакан вĕçĕнче пысăкланса курăнаççĕ. Çавăнпа вара эпир вĕсене куçпах курма пултаратпăр.

Çутă пайăркисемпе ĕçлекен кĕленче линзăсемлĕ микроскоп япалана 2.000 хут таран пысăклатса кăтартать. Ун пек микроскопа чĕрчунсен е урăх япаласен хулăнăшĕпе тăршшĕ миллиметрăн пилĕк пинĕмĕш пайĕ чухлĕ çеç пулсан та, вĕсене курма пулать. Анчах татах пĕчĕкрехисене ку микроскопа та курма май çук. Ученăйсем микроскопсене, унăн линзисене лайăхлатнă çемĕн лайăхлатса пынă, анчах çав питех те пĕчĕк япаласене çутă пайăркисемпе ĕçлекен кĕленче линзăллă микроскопа курма май пулман.

Сакă мĕнрен килет-ха? Çутă пайăрки саланнă вăхăтра хум (световые волны) пулать. Çав хумсен тăршшĕ питĕ кĕске. Анчах эпир курас текен пĕчĕк çеç япала хулăнăшĕпе тăршшĕ çутă хумĕнчен чылай кĕске пулсан, вăл вара çутă хумне чараймасть.

Тĕслĕхрен, шыва лартнă юпа шыв хумне чараймасть, хум çав юпа тавра çаврăнса илет те, каллех малалла каять. Çавăн пекех, çутă хумĕсене япаласем вĕсенчен пĕчĕкрех пулсан, чарса тăраймаççĕ. Çавăнпа вара ытла та пĕчĕк япаласене сăнанă чухне çутă хумĕнчен кĕскерех хум паракан япаласемпе усă курас пулать.

1940 çулта совет ученăйĕсем А. А. Лебедев академикпа унăн сотрудникĕсем электроннăй микроскоп шутласа кăларнă. Электроннăй микроскопра çутă хумĕпе усă курмаççĕ, электронсен хумĕсемпе усă кураççĕ. Электрон хуллен куçса пырать пулсан, унăн хумĕ вăрăмрах пулать. Электронсен хăвăртлăхне ӳстерме пулать. Электрон мĕн чухлĕ хăвăртрах куçать, унăн хумĕ çавăн чул кĕскерех пулать. Электронсен хумĕн вăрăмĕш çутă хумĕн вăрăмăшĕнчен пин хут кĕскерех пулма пултарать. Çапла ĕнтĕ, ахаль микроскопа курма май çук япаласене электроннăй микроскопа курма пулать.

Калăпăр, эпир хамăр умма электроннăй микроскопа шыв тумламĕнчи ахаль микроскопа курăнман пĕчĕк япаласене сăнас тĕллев лартнă. Электронсене ытлашши чарайман питĕ сӳхе япалана çак шывна йĕпететпĕр те ăна микроскопăн пĕр вĕçне вырнаçтаратпăр. Ку япала çине вара пысăк хăвăртлăхпа пыракан электрон пайăркисене яратпăр.

Электронсен хăвăртлăхĕ пысăк пулнипе вĕсен хумĕсем питех те кĕске пулаççĕ, çавăнпа вĕсене эпир сăнас текен пĕчĕк çеç япаласем те чарма пултараççĕ. Электронсене куçпа ан чартăр тесе, микроскоп ăшĕнчи сывлăша вăйлă насуссемпе кăлараççĕ. Электронсем вара, микроскопăн тепĕр вĕçне çитсе, унти экран çине пырса çапăнаççĕ. Экрана электрон пырса çапăннипе çутатакан япала сĕрнĕ. Çавăнпа вара электронсем пырса çапăннă çĕрте экран çинче çутă пулать, электрон пырса çапăнайман тĕлте—тĕксĕмех юлать. Ку тĕксĕм вырăнсем шăпах электрон хумĕсене чаракан, эпир сăнас текен пĕчĕк япаласен мĕлкийĕсем пулаççĕ.

Электроннăй микроскопăн кĕленче линзăсем çук. Ахаль микроскопăн кĕленче линзисем вырнаçнă тĕлте электроннăй микроскопра пушă вырăн çеç. Çак пушă вырăн вăл, çак вырăн йĕри-таврашĕнче магнит пулнă пирки, магнитное поле пулса тăрать. Магнитное поле пулăшнипе электронсене кирлĕ çулпа яма та, вĕсен пайăркисене кирлĕ пек сарма та, пухма та пулать. Хăшпĕр электроннăй микроскопсенче электростатикăллă линзăсемпе усă кураççĕ. Линзăсем пулăшнипе электроннăй микроскопăн тепĕр вĕçĕнчи экран çинче хамăр сăнас текен шыври çав теря пĕчĕк япаласене курма çеç мар, фотоаппаратпа ӳкерсе илме те пулать.

Электроннăй микроскоп пире çутçанталăка лайăхрах тĕпчесе пĕлме пулăшать.

Хальхи вăхăтра электроннăй микроскопа пур çĕрте те усă кураççĕ.

1947 çулта пирĕн çĕршывра туса кăларнă электроннăй микроскоп япалана 200 пин хут пысăклатса кăтартать.

Наукăпа техникăн пур отраслĕсенче те электроннăй микроскоп пысăк усă парать. Биологире вăл пĕчĕк чĕрчунсене, нерва системин строенийĕсене, белоксене тата ытларах тĕпчесе вĕренме май парать.

Медицинăра пĕчĕк микробсене лайăхрах сăнаса пĕлме, вĕсене пĕтермелли меслетсем шыраса тупма пулăшать, тĕрлĕрен чир-чĕрсемпе ăнăçлăн кĕрешме май парать. Ку çеç те мар, этем пурнăçне лайăхрах сăнаса пĕлме, унăн ĕмĕрне вăрăмлатас ыйтăва татса парас ĕçре те электроннăй микроскоп пăллă вырăн йышăнать.

Тырпул тухăçлăхне ӳстерес, тăпра структурине сăнас, ăна лайăхлатса пырас ĕçре те, çавăн пекех çĕнĕ сортлă тырпул, пахча çимĕç тата ытти ӳсентăрансем тăвас, выльăх-чĕрлĕх ăратне лайăхлатас ĕçре те электроннăй микроскоп пысăк усă пама пултарать.

Электроннăй микроскоп пур çĕрте те кирлĕ, пур çĕрте те унпа ăнăçлă усă курма пулать. Çавăнпа та электроннăй микроскоп шутласа кăларнă пăллă совет ученăйĕсене—Лебедев академикпа унăн мухтава тивĕçлĕ сотрудникĕсене Сталинла преми панă.

Ф. КУЗЬМИН. Е. СОФРОНОВ.

Çĕнелнĕ Турай

Советски районĕнчи Турай ялĕнчи колхозниксен килĕсене кĕрсен чун савăнать. Кашни колхозник килĕнче пысăк тĕкĕрсем, сехетсем, патефонсем, самоварсем, çĕвĕ çĕлемелли машинăсем, тĕрлĕрен музыка инструменчĕсем куратăн. Нумай килсенче чӳречесем умĕнче илемлĕ чечексем ешереççĕ. Колхозниксем пуян та культурăллă пурăнаççĕ. Ялта 2 автомашина, 1 мотоциклет, 17 велосипед, чылай килсенче радиоприемниксем пур. Совет влаçĕ çулĕсенче тунă ялти больница, акушер, ветеринарипе зоотехника пункчĕсем, сепаратор пункчĕ, сыхăну уйрăмĕпе перекет касси, апат-çимĕç комбиначĕ, клуб, инвалидсен артелĕн тата Турай шкулĕн çурчĕсем яла илем кӳреççĕ.

1951 çулта Киров ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем нихçанхинчен хастарлăрах ĕçлерĕç, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлерĕç. Колхозниксем ĕçкунĕсем тăрăх нумай тырпул илчĕç. Сăмахран, И. Данилов колхозник çемйи 100 пăт тырă илчĕ. Колхозниксем çĕнĕ çуртсем лартаççĕ, çурт çийĕсене тимĕр, черепица витеççĕ.

Колхоз кĕске вăхăтрах правлени çуртне, гараж, ĕне ферми çуртне турĕ. Халĕ çĕнĕ вите туса пĕтерчĕç.

Колхозниксен пурнăçĕ лайăхланнă май вĕсен культури те ӳссе пырать. Çичĕ çул вĕренмелли шкулта 272 ача вĕренет. Çак шкултан вĕренсе тухнă А. Герасимов юлташ 52 çул учитель пулса ĕçлет. Вăл вĕрентсе кăларнă Я. Иванов, Н. Петров Н. Петровская, З. Петрова, Л. Алексеева, Т. Васильева юлташсем халĕ учительсем пулса ĕçлеççĕ.

Турайри клуб чăн-чăн культура центрĕ пулса тăрать. Колхозниксемпе ялти интеллигенци ĕç кунĕ пĕтсен кунта вăхăта савăнăçлăн ирттерме пухăнаççĕ. Вĕсем хаçат-журналсем вулаççĕ, радио итлеççĕ, шашкăпа шахматла выляççĕ, лекцисемпе докладсем итлеççĕ. Кунтах киноустановка ĕçлет.

Ялти клуб çумĕнче лектори пур. Ăна çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ Я. Иванов юлташ ертсе пырать. Иртнĕ çулта пурĕ 53 лекци вуланă. Лекторсем пулса учительсем, медицинăпа ветеринари работникĕсем, агрономсем ĕçлеççĕ. Лайăх ĕçлекен Я. Ивановпа О. Зайцевăна республикăри лекци бюровĕ Хисеплĕ грамотăсем парса наградăланă.

Ялти клуб çумĕнчи колхоз хорĕ ĕçleме пуçланăранпа кăçал 33 çул тултарать. Хор коллективне 73 çулхи П. Трофимов юлташ ертсе пырать. Хор коллективĕ район центрĕнче те тăтăшах паха концертсем парать.

Колхозлă ял пуянланса, культурăланса пырать. Яла 156 экземпляр хаçат-журнал килсе тăрать.

В. МИХАЙЛОВ.

Естествознани вечерĕ

Кӳкеçри вăтам шкулта çак кунсенче ботаника вечерĕ ирттерчĕç. Вечера естествознани преподавателĕ Ф. Григорьева ертсе пычĕ. Малтанах вăрман çинчен интереслĕ доклад пулчĕ. Пирĕн çĕршыва вăрманпа пуян. Вăрман тăрăхĕсем типĕ çилсенчен сыхлаççĕ. Доклад хыççăн вĕренекенсем вăрман çинчен çырнă сăвăсем вуласа пачĕç, юрăсем юрларĕç.

Мана çак вечерта вăрмансем çинчен каласа пани, сăвăсем, юрăсем питĕ килĕшрĕç. Вечер сехет çурă хушши пычĕ.

С. ТРОФИМОВ,
шкулта вĕренекен.

И. В. Сталин юлташ Киодо агентствин главнăй редакторĕ К. Ивамото господин патне янă послани пирки урăх çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

Япони

ТОКИО, январĕн 3-мĕшĕ. (Радио тăрăх илнĕ хыпар). И. В. Сталин çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхĕ патне янă послание Японири демократиллĕ общественность пысăк хаваслăхпа йышăннă. Январĕн 2-мĕшĕнче Японири хаçатсем тухман. Çавăн пирки Токио хулинче И. В. Сталин посланине «Токио симбун» хаçатăн каçхи кăларăмĕнче кăна пичетленĕ. Хаçат çав послание пĕрремĕш страница варринче, И. В. Сталин юлташăн фотоӳкерчĕкĕпе пĕрле пичетлесе кăларнă. Ăна «Япони халăхне ирĕклĕхпе телей сунатăп. Сталин премьер Япони халăхĕ патне янă послани», тесе ят панă.

ТОКИО, январĕн 3-мĕшĕ. (Радио тăрăх илнĕ хыпар). Японири пур хаçатсем те И. В. Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхне янă послани çинчен нумай çыраççĕ.

И. В. Сталин посланине «Асахи», «Майници», «Иомиури», «Ниппон таймс» тата ытти хаçатсем те курăнмалли вырăнта тата пысăк заголовоксемпе пичетленĕ. «Асахи» хаçат И. В. Сталин юлташăн посланине «Эпĕ Япони никама пăхăнман çĕршыв пулассине шанса тăратăп. Сталин посланийĕ», тесе ят панă. «Иомиури» хаçат ку посланин заголовокĕнче «Сталин премьер Япони халăхĕ патне послани ячĕ. Мире сыхласа хăварас ĕçре ăнăçлăх тума ырă сунать», тесе çырнă. «Ниппон таймс» хаçат послание: «Сталин ятарласа Япони халăхне послани ячĕ, ăна ирĕклĕхпе телей сунать», «Майници» хаçат: «Сталин премьер Япони халăхне салам ячĕ», текен заголовоксемпе пичетленĕ.

«Токио таймс», «Нихон кейдзай» тата «Дзидзи симпо» хаçатсем И. В. Сталин юлташ посланийĕ çинчен пĕлтернине «Мире сыхласа хăварас ĕçре ăнăçлăх тума ырă сунатăп», «Сталин премьер Япони халăхне послани ячĕ», «Сталин премьер çĕнĕ çул ячĕпе послани яни вăл халиччен никхан пулман ĕç» текен заголовоксемпе пичетленĕ.

Японири хаçатсем нумайăшĕ И. В. Сталин юлташăн фотоӳкерчĕкне пичетлесе кăларнă.

Китай Халăх Республики

ПЕКИН, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Китайра тухакан хаçатсем пурте паян Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхĕ патне янă послание пĕрремĕш страницăсенче пичетленĕ.

ШАНХАЙ, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Шанхайри хаçатсем пурте паян И. В. Сталин юлташ Киодо агентствин главнăй редакторĕ Ивамото господин патне янă телеграммăна пичетлесе кăларнă.

«Дагунбао» хаçат: Сталин Генералиссимус Японири кĕрешекен халăх патне послани ячĕ, тесе çырать. Çав послани Япони халăхне хаваслантарчĕ. Ним иккĕленмелли те çук, Япони халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăр кĕрешнĕ, çав кĕрешӳре çĕнтерме пултарĕ.

Чехословаки

ПРАГА, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Паян «Руде право», «Млада фронта», «Праце», «Земледельско новины», «Обрана лиду» тата ытти хаçатсем те И. В. Сталин çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхне янă послание курăнмалли вырăнта пичетленĕ. Словакин центрти хаçачĕсем те И. В. Сталин юлташ Япони халăхĕ патне янă çырăва пичетленĕ.

Польша

ВАРШАВА, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Паян «Трибуна люду» хаçат И. В. Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхĕ патне янă послани çинчен умстатья çырса кăларнă, ăна «Мирпе ирĕклĕх сăмахĕсем» тесе ят панă.

Хаçат çапла çырать: «Сталин сăмахĕсем Япони халăхĕшĕн тата ытти халăхсемшĕн уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çак сăмахсен пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк, мĕншĕн тесен çав сăмахсене Совет Союзĕнчи—ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăхшăн кĕрешекен халăхсене кăмăллани тата вĕсене хӳтĕлени çинчен яланах уççăн пĕлтерсе тăракан государствăри халăхсен сулпуçĕ каларĕ. Ку сăмахсен пысăк пĕлтерĕшĕ çакăнта: вĕсене тĕнчери мĕнпур çĕршывсенчи çĕршер миллион çынсен шухăш-ĕмĕчĕсене палăртакан çын, миршĕн кĕрешес ĕçре чи малта пыракан çын каларĕ. Сталин Япони халăхне хăйĕн тăван çĕршывĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн хастарлă кĕрешнĕ çĕрте тулли ăнăçусем тума ырă сунни Японин 80 миллион çынлă халăхне хăйĕн тăван çĕршывĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешес ĕçре паттăрлатать.

Америка империалисчĕсем Европăра Хĕвеланăç Германирен çĕнĕ вăрçă вучахĕ туса хума, çавăн пекех вĕсем Инçет Хĕвелтухăçĕнче Японирен çĕнĕ вăрçă вучахĕ туса хума васкасах тăрăшаççĕ. Çав çĕршывсенчи милитаристсемпе реакционерсем çине таянса, Японипе Хĕвеланăç Германи халăхĕсен шухăш-ĕмĕчĕсене хирĕç пырса Уолл-стрит агрессорĕсем тĕнчери виççĕмĕш вăрçа пуçарма çав çĕршывсенче плацдармсем тăваççĕ. Акă мĕншĕн мире сыхласа хăварас тата тĕреклетес ĕçре çав икĕ çĕршывăн халăхĕсем никама пăхăнманлăхшăн, çĕршыва оккупацилеснине хирĕç тата агрессие хирĕç кĕрешни уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать.

Америка империалисчĕсем, хăйсен агрессиллĕ планĕсене пурнăçласа, Японие оккупацилеççĕ, унăн халăхĕнчен хăйне тĕллĕн пурăнмалли прависене тытса илеççĕ. Америка оккупанчĕсем, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи договорсене тата Потсдамри декларацие пăсса, Хĕвеланăç Германире çар промышленноçĕн шултра концернĕсене сыхласа хăварнă, вĕсене Нью-Йоркри банксене пăхăнтарнă. Çавăн пекех Америка оккупанчĕсем Японире те питĕ пуян çар концернĕсене сыхласа хăварнă, вĕсене Нью-Йоркри банксене пăхăнтарнă. Вĕсем Япони промышленноçне васкасах хĕçпăшал туса хатĕрлекен промышленность туса хума тăрăшаççĕ, çав вăхăтрах мирлĕ промышленность отраслĕсене пĕтерсе пыраççĕ. Америка агрессорĕсем Корея халăхне хирĕç тискеррĕн вăрçас ĕçре Япони утравĕсем вĕсен тĕп бази пулса тăраççĕ. Риджуэй контроллесе тăракан Япони порчĕсенчен Корейăри вăрçа валли салтаксемпе хĕçпăшал тиенĕ карапсем туха-туха каяççĕ. Японири аэродромсем çинчен вĕççе тухса, Америка бомбардировщикĕсем Пхеньян хулине тапăнаççĕ. Япони фашисчĕсем тата тĕрмерен кăларнă çар преступникĕсем Америка мундирĕсене тăхăнса Корейăра çапăçаççĕ. Америка агрессорĕсем Япони милитарисчĕсемпе гитлерла фашистсен кивĕ планĕсене пурнăçлама хăтланаççĕ.

Япони халăхне хирĕçле политика туса хунă мĕнпур йывăрлăхсене Япони халăхĕн тӳсме тивет.

Çĕршыври лару-тăру çакăн пек чухне И. В. Сталин çĕнĕ çул ячĕпе ырă сунса янă çыру Япони халăх массисен—ют çĕршыв оккупанчĕсене хирĕç, çĕршыва çĕнĕрен хĕçпăшаллантарнине хирĕç, тата хăйсен çĕршывĕнчи реакционерсене хирĕç кĕрешекен халăх массисен чун-чĕрери шухăш-ĕмĕчĕсемпе килĕшсе тăрать.

Мао Цзе-дун сăмахĕ

ПЕКИН, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çакăн çинчен пĕлтерет: январĕн 1-мĕшĕнче Пекинра çĕнĕ çул пуçланнă ятпа банкет пулнă. Унта Китай халăхĕн центральнăй правительствин председателĕ Мао Цзе-дун, центральнăй правительство председателĕн заместителĕсем Чжу Дэ тата Ли Цзи-шень, Государствăн администраци совечĕ премьерĕн заместителĕсем Дун Би-у, Го Мо-жо, Хуан Янь-бэй тата правительствăн, коммунистсен партийĕн тата ытти обществăллă организацисен паллă представителĕсем пулнă.

Банкетра Мао Цзе-дун председатель сăмах илнĕ. Вăл çапла каланă:

«Эпĕ хамăра пурне те, халăх правительстви работникĕсене, халăх добровольцĕсен отрячĕсемпе Халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен çарăн командирĕсемпе салтакĕсене, демократиллĕ пур партисене те, халăхăн пур организацийĕсене те, вак халăхсене пурне те тата пĕтĕм çĕршыври халăха кашни фронтрах çĕнтерӳсем тума ырă сунатăп!»

«Америка агрессине хирĕç тăмалли тата Корейăна пулăшмалли фронтри кĕрешӳре хамăр çĕнтерӳ тумалла пултăр тесе ырă сунатăп эпĕ!»

«Наци оборони фронтĕнче çĕнтерӳ тума ырă сунатăп!»

«Çĕр реформи ирттернĕ çĕрте çĕнтерӳ тума ырă сунатăп!»

«Эпĕ çĕршыври контрреволюционерсене пусармалли кампание ирттерес ĕçре çĕнтерме ырă сунатăп!»

«Экономикăпа укçа-тенкĕ фронтĕнче çĕнтерӳ тума ырă сунатăп!»

«Эпĕ хамăра обществăн тĕрлĕ сийĕсене, чи малтан тата никамран ытларах интеллигенцие, идеологи енĕпе çĕнĕлле воспитани памалли фронтра çĕнтерӳ тума ырă сунатăп!»

«Кунсăр пуçне, эпĕ хамăра çĕнĕ фронтра çĕнтерӳ тума ырă сунатăп! Ку фронтра халăхăн, уйрăмах ĕçлĕ çынсен хуçалăхри йĕркесĕрлĕхсене хирĕç, пурлăха пĕр кавар туса çаратакансене хирĕç, укçа-тенкĕпе пурлăха усăсăр тăккаланине тата бюрократизма хирĕç кĕрешес ĕçе анлă сармалла, çĕнтерӳллĕн тата айăплисене нимĕн хĕрхенмесĕр кĕрешсе пымалла, кивĕ обществăн çав ирсĕр каяшĕсенчен тасалмалла!»

«Юлташсем! Маларах асăннă пур фронтсенче те эпир 1951 çулта çĕнтерӳсем тума пултартăмăр, хăшпĕр енĕпе пысăк çĕнтерӳсем турăмăр. Эпир пурте пĕрле тăрăшса ĕçленипе 1952 çулта çав задачăсене пурне те пурнăçлас ĕçре тата пысăкрах çĕнтерӳсем тума пултарассине шанса тăратпăр».

«Сывă пултăр Китай Халăх Республики!»

Корейăри ĕççем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтерет: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтереççĕ.

Вăтаçĕртипе хĕвеланăçĕнчи фронтсенче уйрăмах паллă улшăну пулман.

Хĕвелтухăçĕнчи фронтра Халăх çарĕн соединенийĕсем фронтăн хăшпĕр участокĕсенче тăшмана хирĕç тупăсемпе тата пулеметсемпе переççĕ.

Ким Ир Сен çĕнĕ çул ячĕпе Корея Халăх çарĕн салтакĕсемпе офицерĕсене янă салам

ПХЕНЬЯН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Корея Халăх çарĕн верховнăй командующийĕ Ким Ир Сен çĕнĕ çул ячĕпе Корея Халăх çарĕн салтакĕсемпе офицерĕсем патне саламлă çыру янă. Унта çапла каланă:

Америкăн империалисла агрессорĕсем хăйсен Корейăна хирĕçле ирсĕр планĕсене пăрахăçламасан, агрессиллĕ вăрçа малалла тăссан, вĕсен вара поражени тӳссе намăс курма тивет...

Пирĕн офицерсемпе салтаксен халиччен тунă питĕ пысăк çĕнтерӳсене çирĕплетмелле, малашне тата пысăкрах çĕнтерӳсем тума хамăр çарти геройсене тата примерлă салтаксен речĕсене пысăклатса пымалла, çар ĕçне татах лайăхрах вĕренмелле, çар техникипе усă курма лайăхрах вĕренсе çитмелле, идейăпа политика тĕлĕшĕнчи пĕлӳсене ӳстерсе пымалла, çапăçури опытпа кунсеренех пĕр-пĕрне паллаштармалла, халăхпа тытакан çыхăнăва тата ытларах çирĕплетмелле, пирĕн çапăçури вăй-хăвата ӳстерме тăрăшмалла, çавна тума пĕтĕм вăя памалла, тенĕ çырура.

Америкăри йăласем

Государство учрежденийĕсенче жуликла ĕççем тăваççĕ тата взятка илеççĕ

ВАШИНГТОН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство учрежденийĕсенче жуликла ĕççем тăвасси тата взятка илесси анлă сарăлнă. Çавна май халĕ унта ĕçлĕ çынсен «моральлĕ шухăшĕсене юсама» мĕн тăвасси çинчен тĕрлĕ сĕнӳсем параççĕ.

Пĕрисем авалхи çынсен «кивĕ йăлисене» тытса пымалли йĕрке тума сĕнеççĕ, государство служащийĕсем валли çынсем хăйсене хăйсем мĕнле тыткаламалли йĕрке çинчен «этика кодексĕ» текенскерне йышăнма чĕнеççĕ. Анчах вĕсене хирĕç пыракансем çак «кивĕ йăласене» тытса пымалли йĕрке туни те ĕçре пулăшас çук, мĕншĕн тесен куç-кĕретĕнех жуликла ĕçсем тăвакансем сахал мар, тесе уççăнах калаççĕ.

Суйлавçăсене лăплантарма тăрăшса, демократиллĕ партие ертсе пыракансем Трумэн правительство аппаратĕнчи жуликла ĕççене хирĕç кĕрешме «çирĕп мерăсем» йышăнĕ тесе сăмах параççĕ.

Республиканецсенчен пĕри—Тоби сенатор (Нью-Гемпшир штатĕнчен) нумай пулмасть Вашингтонри телевизорсен станцийĕнче сăмах тухса каланă. Вăл правительствăн айăпа кĕнĕ чиновникĕсемпе хысна укçине çаратакансене хулăпа е пушăпа хĕнесе наказани памалли йĕркене çĕнĕрен тума чĕннĕ. «Вашингтон пост» хаçат умстатьяра çырнă тăрăх, Тоби конгресра çынсене хĕнемелли йĕрке тумалли закон йышăнмалла, судсене службăра айăпа кĕнĕ федеральнăй чиновниксене пурне те хулăпа е пушăпа хĕнесе наказани пама чĕнсе илме право памалла, тенĕ.

Тĕнчери çĕршывсем хушшинчи килĕшӳсене пăсса

„Европа çарĕ“ çинчен Хĕвеланăç Германири „Дер шпигель“ журнал мĕн çырать

БЕРЛИН, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕвеланăç Германири «Дер шпигель» журналта паян çакăн пек хыпар пичетленĕ: Парижра Франци, Бельги, Итали, Люксембург тата нимĕç офицерĕсен вăрттăн канашлăвĕ пулнă, унта «Европа çарĕ» текенскерне тăвас пирки килĕшӳ тунă.

Хыпарта çапла каланă: Парижран илнĕ шанчăклă сведенисем тăрăх, Европа çарĕнче 43 дивизи пулмалла. Унта нимĕçсен танклă ултă дивизийĕ кĕмелле, кашни дивизире 300 танк пулмалла. Çав çара тата нимĕçсен мотомеханизированнăй 6 дивизийĕ кĕмелле, вĕсен кашнин 200 танк пулмалла. Асăннă çарта нимĕçсен 1.800 самолечĕ пулать, çав шутра: реактивлă истребительсем, разведка самолечĕсем тата истребитель-бомбардировщиксем пулаççĕ.

ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ

Америкăпа Англи блокĕ „коллективлă мерăсем йышăнас“ тĕлĕшпе тума сĕнекен ĕççен агрессиллĕ тата хăрушă тĕллевĕсене СССР делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский тăрă шыв çине кăларнă

ПАРИЖ, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Паян Генеральнăй Ассамблейăн Политика комитетĕнче «коллективлă мерăсем» текен ыйтупа ĕçлекен комитет тăратнă доклада тата ку доклад тăрăх йышăнма 11 çĕршыв делегацийĕсем сĕнекен резолюци проектне малалла сӳтсе явнă.

Паянхи ларура СССР делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский пысăк сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахне никам сирсе яма пултарайман фактсемпе çирĕплетсе пынă тата витĕмлĕ сăлтавсем кăларса тăратнă. Унăн сăмахне пур делегацисем те, лару залне пырса тулнă журналистсемпе халăх та питĕ тимлĕ итленĕ.

«Коллективлă мерăсем» текен ыйтăва иртнĕ çултах, Генеральнăй Ассамблейăн 5-мĕш сессийĕнчех пăхса тухни тата çав ĕç суйса «миршĕн усăллă пĕрлĕх тăвасси» тесе ят панă резолюци йышăннипе вĕçленни çинчен Вышинский аса илтернĕ. Ку резолюци вăл—мире çирĕплетмелли программа мар, çĕнĕ вăрçă хатĕрлемелли тата çавăн пек вăрçă валли условисем хатĕрлемелли программа. Çав резолюци çут тĕнче курнипе Америка Çурçĕр Корейăра вăрçă пуçласси пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тăнине совет делегацийĕн пуçлăхĕ палăртнă. Америка монополисчĕсем Çурçĕр Корейăри вăрçа пуçарчĕç, анчах çав вăрçăра вĕсем хăйсем тĕллĕн, çав авантюристла вăрçа США-на экономикăпа политика тĕлĕшĕнчен пĕтĕмпех пăхăнса тăракан ытти государствăсене хутшăнтармасăр, ăнăçу тума пултарас çукки палăрчĕ. Çавăнпа та Америка монополисчĕсем «миршĕн усăллă пĕрлĕх тăвасси» тесе суя ят панă резолюцие шухăшласа кăларнă.

«Коллективлă мерăсем» тесе ят парса Генеральнăй Ассамблейăна тăратнă доклада тĕплĕн, пĕр пункт хыççăн тепĕр пунктне, тĕпчесе тишкерсе тухса, Вышинский çакна кăтартса панă: çак доклад вăл «миршĕн усăллă пĕрлĕх» тумалли программа мар, вăл мире хирĕç тата мире юратакан халăхсене хирĕç чăн-чăн кавар тунă государствăсен, вăрçă вăрçма тăрăшакан государствăсен агрессиллĕ тĕллевĕсене пурнăçлама пĕрлешнĕ ушкăнăн программи пулса тăрать. Çак доклад Пĕрлешнĕ Нацисен организацийĕн уставĕн принципĕсене, тĕллевĕсене тата задачисене кĕретĕнех ним вырăнне те хумасть.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем агрессиллĕ çĕнĕ ĕççем тума хатĕрленнине, сăмахран, вĕсем Китай Халăх Республикине кăнтăр енчен тапăнма хатĕрленни çинчен каласа, совет делегацийĕн пуçлăхĕ кун пирки фактсем илсе кăтартнă. Генеральнăй Ассамблейăна тăратнă докладра «коллективлă мерăсем» тесе каланă ĕççене тунипе Пĕрлешнĕ Нацисен организацийĕпе вăрçă хатĕрĕ вырăнне усă курма палăртнă. Доклад авторĕсем çав «мерăсем» çĕнĕ вăрçă пуçарма тăрăшакансен законсăр ĕçĕсене витсе пытантарма май парассине шута илнĕ.

Ку ултава, паллах ĕнтĕ, тăрă шыв çине кăларĕç,—тенĕ Вышинский.—Анчах ултавçăсем çак намăссăрла ĕçрен мĕн май килнĕ чухлĕ усă илесшĕн, вĕсем пĕтĕм этемлĕхе питĕ пысăк инкек тата хĕн-хур кӳрсе те пулин, çав ĕçрен нумай усă илесшĕн.

Вышинский юлашкинчен çапла каланă: СССР делегацийĕ «коллективлă мерăсем» текенскерсем тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн докладне тата çав доклад тăрăх йышăнма 11 çĕршыв тăратнă резолюци проектне пачах юрăхсăр тата мир ĕçĕшĕн сиенлĕ, вĕсем, хальхи резолюци проекчĕн никĕсне хывнă «миршĕн усăллă пĕрлĕх тăвасси» тесе суя ят панă резолюци пекех, мир ĕçĕшĕн хăрушă пулса тăраççĕ, тесе шутлать. Çавăнпа та СССР делегацийĕ çав резолюцие—тĕнчери çĕнĕ вăрçă пуçлас çулпа тата тепĕр утăм туни пулса тăракан резолюцие хирĕç сасăлать.

Вышинский тухса каланă хыççăн лару хупăннă. Ку ыйтăва тепĕр ларура малалла сӳтсе явма палăртнă.

Политика комитечĕн кăнтăрлахи ларăвĕ

ПАРИЖ, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Политика комитечĕн паян кăнтăрла пулнă ларăвĕнче «коллективлă мерăсем» тĕлĕшпе ĕçлекен комитет тăратнă доклада малалла сӳтсе явнă. Пренире Венецуэла, Çĕнĕ Зеланди, Греци, Гаити представителĕсем тата гоминдан шайкин представителĕ сăмах каланă. Вĕсем комитет докладĕнчи шухăшсенех тепĕр хут каласа панă. Ораторсем СССР делегацийĕн пуçлăхĕ Вышинский мĕн калани çинчен нимĕн те шарламасăр иртсе кайма тăрăшнă. Совет делегацийĕн пуçлăхĕ хăйĕн сăмахĕнче Америкăпа Англи блокĕ сĕнекен «коллективлă мерăсем» текенскерсем Устав принципĕсене пĕтĕмпех хирĕçле пулнине, вĕсене США хăйĕн агрессиллĕ планĕсене пурнăçлас ĕçе нумай государствăсене хутшăнтарас шутпа кăларса тăратнине, çавăн пек агрессиллĕ ĕççен тĕслĕхĕ Америкăн Корейăри интервенцийĕ пулнине усăмлă кăтартса панă.

Индонези делегачĕ пренире тĕрĕсрех шухăшсене каласа панă. Пĕрлешнĕ Нацисен организацийĕн пур членĕсем те агрессие сирсе яма тата кирек ăçта та пулин вăрçă пуçлансан, ăна хирĕç кĕрешме пурте пĕрле коллективлă мерăсем йышăнасси ООН уставĕн тĕллевĕ пулса тăрать, тет вăл. Уставра каланă тăрăх, ку е тепĕр государство агрессиллĕ ĕç тунине тата агрессиллĕ ĕç тăвассипе хăратнине шăпах та Хăрушсăрлăх Совечĕн палăртмалла. Çавна палăртнă хыççăн, шăпах та Хăрушсăрлăх Совечĕ мире хӳтĕлес тĕлĕшпе решени йышăнма тивĕçлĕ, ку решение Хăрушсăрлăх Совечĕн яланхи членĕсем пурте пĕр шухăшлă пулнипе йышăнмалла. Анчах пире кунта çавăн пек мерăсене Хăрушсăрлăх Совечĕн мар, Генеральнăй Ассамблейăн йышăнмалла тесе калаççĕ пулсан, кун пек калани çине пирĕн питĕ тимлĕ пăхса, ыйтăва тĕплĕ сӳтсе явас пулать.

Паян кăнтăрлахи ларура пур делегатсене те СССР делегацийĕ тăратнă резолюци проектне панă. Ку проектра çапла каланă:

«Пĕрлешнĕ Нацисен организацийĕн тĕп задачи тĕнчери халăхсем хушшинчи мирпе хăрушсăрлăха сыхласа хăварасси тата тĕреклетесси пулнине асра тытса, Устав тăрăх халăхсем хушшинчи мирпе хăрушсăрлăха сыхлассишĕн тĕп ответлăха Хăрушсăрлăх Совечĕ çине хунине шута илсе, Генеральнăй Ассамблея:

1. Коллективлă мерăсем тĕлĕшпе ĕçлекен комитета салатса яма йышăнать.

2. Хăрушсăрлăх Советне, Уставăн 28-мĕш статьине килĕшӳллĕн, хальхи вăхăтра тĕнчери çĕршывсем хушшинче пулса тăнă йывăрлăха пĕтерме тата çĕршывсем пĕр-пĕринпе туслă çыхăнусем тытмалла тума мĕнле мерăсем йышăнасси çинчен сӳтсе явма пĕр тăхтаса тăмасăрах ларусем ирттерме сĕнес.

Вăхăтран вăхăта пухăнакан ларусенче, чи малтан, Корейăра çапăçма чарăнасси çинчен пыракан калаçусене ăнăçлă вĕçлеме пулăшмашкăн Хăрушсăрлăх Совечĕн мĕнле мерăсем йышăнмалли çинчен пăхса тухмалла».

ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИРИ ÇАМРĂКСЕМ ХУШШИНЧЕ АМЕРИКĂНА ХИРĔÇЛЕ ШУХĂШСЕМ ВĂЙЛАННĂ

РИМ, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). «Аванти» хаçат Бонн хулинчен илнĕ хыпара пичетленĕ, унта çапла каланă: Америка оккупаци влаçĕсен представителĕ Купер союзниксен комиссийĕнче «çамрăксен пайне» ертсе пырать. Вăл Хĕвеланăç Германи правительствин шалти ĕçсен министрĕпе Лерпа калаçнă. Ун чухне вăл Хĕвеланăç Германири çамрăксем хушшинче Америкăна хирĕçле шухăшсем сарăлнă пирки хăй кăмăлсăр пулни çинчен пĕлтернĕ.

Лерпа калаçнă чухне Купер Германири çамрăксем хушшинче çĕршыва çĕнĕрен хĕçпăшаллантарнине хирĕç тата оккупаци çарĕсене илсе кайтарассишĕн протестлени сарăлнине палăртнă. Çамрăксем Америкăна хирĕçле демонстрацисем час-часах иртерме пуçланă пирки Купер уйрăмах хытă тарăхнă. Çавăн пек демонстраци, сăмахран, çамрăксен слечĕ вăхăтĕнче пулса иртнĕ. Слета 20 пин çамрăк пухăннă. Ăна Бонри влаçсем иртнĕ çура Рейн юханшывĕн сыранĕнчи Лорелей сăрчĕ патне пухнă. Демонстраци ирттернĕ вăхăтра çамрăксем Америка ялавĕсене çура-çура тăкнă.

Çамрăксен «Дер Кампф» хаçатĕнче Америка политикине хирĕç тата Германие çĕнĕрен хĕçпăшаллантарнине хирĕç çырнă статьясем пичетленнĕ. Хĕвеланăç Германири çамрăксем нимĕççен ирĕклĕ çамрăкĕсен союзĕн пухăвĕсене сӳреме юратаççĕ, вĕсем ытти организацисем пухакан пухусене сахал сӳреççĕ.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ДЕМОКРАТИЛЛĔ ÇАМРĂКСЕН ФЕДЕРАЦИЙĔН ИСПОЛКОМ СЕССИЙĔ КОПЕНГАГЕНРА ПУЛАТЬ

КОПЕНГАГЕН, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). «Ланд ог фольк» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 20-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинче Копенгагенра Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ çамрăксен федерацийĕн исполком сессийĕ пулса иртмелле.

Сессире çак ыйтусене пăхса тухаççĕ:

1. Çамрăксен прависене хӳтĕлес ыйтупа Пĕтĕм тĕнчери конференци пухасси çинчен.

2. Англипе Францири çамрăксен мире сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен организацийĕсен ĕç опычĕ.

3. Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ культурăллă çыхăнусем организацилес тĕлĕшпе йышăннă решени тата ку ĕçе çамрăксем хутшăнасси çинчен.

Конференци делегачĕн отчечĕ

Шупашкарти Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводăн тăваттăмĕш сборочнăй цехне рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем тата служащисем—250 çынна яхăн пухăнчĕç. Кунта ытти цехсенчи рабочисем те пулчĕç.

Пухура пулнисем Миршĕн тăракансен Пĕтĕм Союзри виççĕмĕш конференцийĕн делегачĕ, механически цехри токарь-стахановец Василий Павлов конференци ĕçĕсем çинчен каласа панине пысăк çĕкленӳпе итлерĕç.

— Конференци,—терĕ Павлов юлташ,—совет çыннисем миршĕн, халăхсем хушшинчи туслăхшăн яланах хастарлă кĕрешнине, аслă Сталин ертсе пыракан мирпе демократи лагерĕ вăрçă лагерĕнчен темиçе хут вăйлăрах пулнине татах та тепĕр хут ĕнентерӳллĕн кăтартса пачĕ.

Павлов юлташ рабочисемпе работницăсене, инженерсемпе техниксене мире стахановла ĕçпе çирĕплетме чĕнсе каланине пухура пулнисем аллă çупса ырларĕç.

Орденлĕ завод коллективĕ мир ĕçне тĕреклетессишĕн вирлĕ кĕрешет. 1951 çулхи производство планне вăл срокчен тултарнă, коммунизмăн аслă стройкисен заказĕсене чыслă пурнăçласа пырать. Темиçе çĕр стахановец кăçал 2—3 çул нормине тултарнă. Вĕсен шутĕнче Миршĕн тăракансен Пĕтĕм Союзри конференци делегачĕ В. Павлов токарь та пур. Вăл 1953 çул нормине тултарса çитерессишĕн тимлĕ тăрăшса ĕçлет. Çапла вара, В. Павлов юлташ ĕççынниcене хастарлă ĕçпе те, витĕмлĕ сăмахпа та миршĕн кĕрешме чĕнет.

Тулли хаваслăх

Атăл леш енчи ачасен çуртĕнче Çĕнĕ çул ячĕпе савăнăçлă ёлка пулчĕ. Ачасем патне Шупашкарти пир-авăр фабрикинчен комсомолецсем хăнана пынă. Вĕсем темиçе çул хушши ачасен çурчĕпе çыхăну тытаççĕ. Ачасем валли хут купăс, шашка-шахмат, лото тата ытти вылямалли япаласем нумай илсе панă.

Акă савăнăçлă юрă вăхăтлăха чарăнать. Ачасен çурчĕн директорĕ А. Воронцов юлташ ачасене Çĕнĕ çул ячĕпе саламласа ырлăх сунать, комсомолецсене пысăк парнешĕн тав тăвать. Ун хыççăн пир-авăр фабрикинчи комсомол организацийĕн секретарĕ сăмах илет. Вăл ачасене саламлать, вĕренӳре татах та пысăк çитĕнӳсем тума ырă сунать.

Марш кĕвви хаваслă янăрать. Ачасем тепĕр зала куçаççĕ. Кунта вĕсене илемлĕ ёлка кĕтет.

Зал тулли ачасем. Мĕн чухлĕ савăнăç, хаваслăх! Икĕ рет карталанса тăнă ачасем «Пирĕн ёлка» юрра шăрантарма тытăнаççĕ. Хĕл мучи ачасене кучченеçсем парать. Ачасем Тăван çĕршыва, аслă Сталина мухтаса юрăсем юрлаççĕ:

Çурхи çил вĕрет çĕршывăм тăрăх,
Хаваспа сиксе вĕрет кун-çул.
Пирĕн пек савма-кулмашкăн урăх
Тĕнчере никам та пĕлеймест.

Çĕнĕ çул праçникĕ — ёлка савăнăçлă иртрĕ. Хĕллехи каникул пуçланчĕ. Ачасен çуртĕнче ĕçлекенсем каникул вăхăтĕнче мĕн тумаллине малтанах палăртса хунă. Ку вăхăтра ачасем театрта, кинора пулаççĕ, экскурсие каяççĕ, вăрмана çӳреççĕ, тĕрлĕрен вăйăсем выляççĕ. Çапла, каникул вăхăтĕнче çĕнĕ вăй пухса, вĕренме тытăнаççĕ.

Ф. ШАПОШНИКОВ.

Спорт хыпарĕсем

Хоккей вăййипе Шупашкар хули кубокне илессишĕн пынă ăмăрту вĕçленчĕ. Ăмăртăва «Динамо», «Спартак», «Искра», «Молния» спорт обществисен командисем хутшăннă. Ăмăртура «Молния» спорт обществин команди мала тухнă, ăна хула кубокне панă.

* * *

Кăçалхи январĕн малтанхи кунĕсенче Россия Федерацийĕнчи чылай хуласенче йĕлтĕрпе тата конькипе ярăнас тĕлĕшпе ăмăртусем пулса иртеççĕ. Çак кунсенче Шупашкар хулинче çамрăк спортсменсен шкулĕнче вĕренекенсен пĕр ушкăнĕ Челябинск хулине тухса кайнă. Вĕсем унта конькипе тĕрлĕ фигурăсем туса ярăнса РСФСР-та малти вырăна тухассишĕн пыракан ăмăртăва хутшăнаççĕ.

Йĕлтĕрпе ярăнса Россия Федерацийĕнче малти вырăна тухассишĕн Уфа хулинче пулакан ăмăртăва Чăваш республикинчен 12 физкультурник хутшăнать. РСФСР-ти спортсменсем конькипе ярăнас тĕлĕшпе Киров хулинче тĕл пулаççĕ. Ялсенчи йĕлтĕрçĕсен РСФСР-ти ăмăртăвĕ Киров хулинче пулса иртет. Çав ăмăртусене пирĕн республикăри чи пултаруллă спортсменсем хутшăнаççĕ.

Пĕлтерни

Январĕн 5-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинечĕнче диалектиклă материализма харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем валли: «Марксистла диалектикăллă меслетĕн тĕп паллисем» тема тăрăх лекци пулать (иккĕмĕш лекци). Лекцие Г. Г. Германов юлташ вулать.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Ответлă редактор М. К. КОСТИН.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01203 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.